# ТУЙ ПУЛАТЬ-И, ПУЛМАСТЬ-И?

(Свадьба отменяется)
(мелодарама)

Пьесăри çынсем:
Лида
Юрик – унăн упăшки пулнăскер
Вася – вĕсен ывăлĕ
Мишель
Серж -студентсем
Николя
Лена – кӳршĕ хĕрĕ
Света – çураçнă хĕр
Георгий – Света ашшĕ
Нина – Света амăшĕ
Кеша – Света тетĕшĕ
Ильнар – ял каччи
Зоя – Юрикпе килнĕскер

## ПРОЛОГ.

*Тĕттĕм. Мишель çывăрса ларать. Çутă пайăркисем Васяпа Ильнар çине ӳкеççĕ. Вĕсем дуэле тухнă, шпагăсемпе çапăçаççĕ. Светапа Лена чупса килеççĕ те вĕсем хушшине тăраççĕ. Света Ильнара, Лена Васяна уйăрса илсе каяççĕ. Çутă çуталать. Хĕр илме кайнă чухнехи туй юрри илтĕнет. Вася Мишель патне чупса пырать.*

ВАСЯ. Мишель! Мишель, эсĕ мĕн çывăрса ларан? Хĕр илме каймалла.
МИШЕЛЬ. Ăшă çĕре ларнă та тĕлĕрсех кайнă.
ВАСЯ. Тумлан часрах, кайрăмăр, сана кăна кĕтетпĕр.
МИШЕЛЬ. Тăхта, Базиль, тĕлĕк курнă эпĕ. Эсĕ тутар ачипе дуэле тухнă пек.
ВАСЯ. Тутар ачипе мар, çил ачипе дуэле тухатăп эпĕ. Курмастăн-им тулта еплерех çил-тăман хуçаланать. Халь хускалмасан кайран вуçех хĕр патне çитейместпĕр. Атя часрах!

*Васяпа Мишель тухса каяççĕ. Личук вĕсем кайнă енне хĕрес хурать.*

ЛИЧУК. Турăпа пĕрле кайăр.

*Лена чупса килет те пуçне усса каялла каять.*

## 1 ПАЙĔ.

1 картина. *Хĕр килĕнче, кунта туй кĕтеççĕ. Ашшĕ шутпа тавар чекĕсене шутласа ларать. Кеша кĕрет.*

НИНА. Халĕ те çил лăпланмарĕ-и?
КЕША. Çук. Хĕр ăсатма килекенсем саланса пĕтрĕç.
НИНА. Вĕсем те кĕтсе ывăнчĕç ĕнтĕ, пиллĕк çитет вĕт.
КЕША. Туй юррине илтсен килетпĕр терĕç.
ГЕОРГИЙ. 103 тенкĕ виçĕ хут, хушас 46, хушас 28. Пурĕ пулать 13 пин те 13 тенкĕ. Вăт лавккаран кăна мĕн чухлĕ апат çимĕç илсе тултарнă эпир сана качча пама. Туй вара халĕ те çук.
НИНА. Кам çылăха кĕчĕ-ши, кам ылханчĕ-ши?
КЕША. Атте ĕнтĕ.13 пинлĕх кăна тăккаланнă, 14 пинлĕх илнĕ пулсан тăман та тухмасчĕ.
ГЕОРГИ. Çапла, саншăн аттене тăрăхласа пултăр, саншăн ялан атте айăплă. Эсир çылăха кĕрсен те атте айăплă, эсир çапăçса çӳресен те атте айăплă.
СВЕТА. Килĕç-ха, çула хӳсе лартнă пуль, çул уçасса кĕтеççĕ пуль.
ГЕОРГИ. Вăт пуль кăна çав, тен пуль те мар. Пули-пулми. Ни унталла, ни кунталла. Тен авланасшăн та мар-ха вăл. Авланакан çын çанталăка пăхса тăмасть, килет.
СВЕТА. Мĕнле? Куратăн вĕт çанталăк мĕнле иккенне.
НИНА. Çӳпçе Хĕветĕр арăмĕ пирĕн умран ирех темиçе хут хутларĕ, çавах ылханчĕ пуль.
ГЕОРГИ. Вĕсем путлĕн качча кайса путлĕн авланайманнишĕн çын айăплă мар.
КЕША. Путлĕнех авланасшăнччĕ те вĕт, авлантармарăн.
НИНА. Кеша, чĕлхӳне пит вылятмасан та юратчĕ сана.

ГЕОРГИ. Санăн ак çакăнта виçĕ пуслăх ăс пулманшăн эпĕ айăплă мар. Эпĕ сире лайăх пултăр тесе тăрăшатăп,  телейлĕ тăвасчĕ тесе тăрăшатăп.
КЕША. Телейлĕ турăн ĕнтĕ, шутсăр телейлĕ турăн. Пĕтĕм ял ăмасанса тăмалла телейлĕ турăн эс мана, атте. Хама хам та курассăм килми пуличчен телейлĕ турăн.
ГЕОРГИ. Çемье çавăрасси вăл ача вăййи мар, шутласа тăваç ăна. Пĕрре те хама хумарăр. Пĕри  тĕнче наянĕ, пĕр ĕç патне çипăçни çук. Эс ялан çынпа çапăçса çӳрен. Хĕре хăть йĕркеллĕ качча парасчĕ теттĕм, унта та вĕт хирĕçсе кăна пырать. Çак таранччен тăмалла-и вара туйăн? Вуниккĕ валли килме калаçса татăлтăмăр вĕт.
НИНА. Машина килсе чарăнмарĕ-и вара?
СВЕТА. Çитрĕç те ак.
ГЕОРГИ. Тинех иккен. Халь ак туй кĕтсе илме те çын çук. Туй халăхĕсĕр мĕн туйĕ пултăр ĕнтĕ вăл.

*Ильнар кĕрет, вăл чĕрĕ чечек çыххи йăтнă.*

НИНА. Ильнар-çке.
ГЕОРГИЙ. И-и, тата, çӳрет кунта.
ИЛЬНАР. Туй булми-мă?
ГЕОРГИ. Пулать, мĕнле ан пултăр?
ИЛЬНАР. Халĕ те килмен те. Эп ĕлкĕреймеп те пулĕ терĕм. Хулана кайса килтĕм. Çулсене вырăн-вырăн питĕ вăйлă лартнă, аран çитсе ӳкрĕм. Дорожниксем хырса кăна каяç, ятрă сакаттан хырман пекех. Света, ку сана валли. *(Чечек çыххине парать.)* Хулана ятарласа сан валли чечек илме кайса килтĕм.
СВЕТА. Тавтапуç, Ильнар.
ИЛЬНАР. Эппин качча тухатăнах, Светлана?
ГЕОРГИ. Ма качча тухмалла мар тет вара унăн?
ИЛЬНАР. Мана тăлăха хăваратăнах апла. Эх, Света, Светочка, Светлана...
СВЕТА. Ху аттене ӳкĕте кĕртеймерĕн те.
ГЕОРГИ. Тĕнчере хĕр пĕтмен, теприне тупса яран.
ИЛЬНАР. Кирлĕ мар мана тепри. Эп Светана çеç юрататăп. Ма тиркетĕн-ха мана, Георги абăй. Мин те Эсен малайĕ,

Света та Эсен кăзĕ. Син минэ бĕлессĕс, мин синэ бĕлем. Аллах хăйех çырнă пире пĕрле пулма, Георги абăй.
ГЕОРГИ. Аллах мĕн çырнине пĕлместĕп, анчах Христос турă сире пĕрле пулма çырманнине пĕлетĕп. Сана нице раз каларăм Светана манса кай тесе. Ма татах килен кунта? Сан валли тутуар хĕрĕсем сахал-и?
ИЛЬНАР. Кăмăла каякан çук çав, Георги абăй.
ГЕОРГИ. Асанкассинче çук пулсан Мучелейке кит, Шланкака кит. Кара ките мĕн пысăкăш аул, анта кит. Унта та тупаймасан Çĕпреле кай, Пăвана кай.
ИЛЬНАР. Хăть те Хусана ăсат, пурпĕр Света пекки пулмасть унта. Мин яраттам синĕн кăзăна, зур яраттам. Света та мана юратать, эс кăна юратмастăн. Начар малай мă мин? Эттей бак мă,  эней бак мă?
ГЕОРГИ. Якши, якши. Эс те лайăх малай, Киям абый та лайăх çын, Несиме аппа та кăмăллă хĕрарăм. Шел, тăванлă пулаймастăп вĕсемпе.
ИЛЬНАР. Ма пулаймастăн? Вĕсем паян тесен паян Светана кин тума хатĕр. Света хăй те мана качча тухма хатĕр. Шăлай мă, Света?
СВЕТА. Шăлай.
ИЛЬНАР. Света, качча ан тух паян. Эп пултараймастăп сансăр пурăнма, мин яраттам синэ.
СВЕТА. Мин синэ дэ яраттам, Ильнар. *(Пĕр-пĕрне ыталаса илеççĕ.)*
ГЕОРГИ. Несту бу? Ну-ка хăпăр пĕр-пĕринчен. Тупнă ача вăййи. *(Светана сирет.)* Эс вара кĕрсе кай. Кутна хĕс те лар упăшку килессе кĕтсе.
ИЛЬНАР. Света , мин яраттам синэ. Зур яраттам.
СВЕТА. Мин синэ дэ яраттам, Ильнар.
ГЕОРГИЙ. Эп сана çиччас юраттарап. Тухса кай кунтан халех.
ИЛЬНАР. Георги абăй, юта качча ан пар  ăна. Мине бирелĕ Светана.
ГЕОРГИ. Хăлха чикки çиччас бирем сина. Ĕнер каларăм-и эпĕ сана кунта текех ан кил тесе, каларăм-и?
ИЛЬНАР. Каларăн, Георги абăй, каларăн. Анчах манăн чĕре урăхларах калать çав, сан Светапах пулмалла тет.

СВЕТА. Ман хамӑн та санпа кӑна пулас килет, Ильнар. Атте, ан чар пире пӗрле пулма.
ГЕОРГИ. Эп сана тепӗр пӳлӗме кӗрсе кай терӗм-и? Хупса лартӑр ӑна! *(Ильнара.)* Сана вара эпӗ ӑслӑ ача тесе. Мӗн, туя пӑсма шут тытрӑн-и? Ҫак самантра упӑшки килсе кӗрсен мӗскер тес ман?
ИЛЬНАР. Упӑшки пулман-ха вӑл, Света яратмым анӑ. Мин яраттам, мине бирелӗ.
ГЕОРГИ. Юк, юк дирэ. Кит мӑнтан. Кай та ҫухал, килсе кӗнӗ ан тулӑр тек.
СВЕТА *(тухса).* Ильнар!
ИЛЬНАР. Света!
КЕША. Мӗн аттене итлесе тӑран, Ильнар. Юратан пулсан ҫавӑт та кай.
НИНА. Кеша, эс те пулин чарӑн-ха.
ГЕОРГИ. Эп сана ҫиччас ҫавӑттарса ярап. Ху пурӑнма пӗлместӗн тата ҫынна та пурӑнма памастӑн.
ИЛЬНАР. Эх, Георги абый, хӗрне юратмастӑн эсӗ.
СВЕТА. Ильнар!
ГЕОРГИ. Ма кӑлартӑр ӑна?!
СВЕТА. Атте, Турӑ пул.
НИНА. Кӗр-ха, хӗрӗм, кӗр, туй килме пултарать.
СВЕТА. Ан килтӗр те вӑл пӗреххут. *(Йӗрсе кӗрсе каять.)*
ГЕОРГИ. Ну-ка, Ильнар, вашлат кунтан. Манса кай пирӗн тӗле. Ҫитет сана манӑн хӗр пуҫне ҫавӑрса. Памастӑп терӗм-и сана? Эппин памастӑп. Кит, кит мӑнтан чизрек. *(Ильнара чышса кӑларса ярать.)* Тата мӗн кӑтартаҫҫӗ-ши мана ку ачасем? Ҫунмалли тата мӗн тупса параҫҫӗ-ши?
НИНА. Тепӗр тесен Ильнарах памаллаччӗ ҫав, хӑҫантанпа пӗр-пӗрне юратаҫ.
ГЕОРГИ. Тата эсӗ те ача хыҫҫӑн кай.
КЕША. Ильнара качча панӑ пулсан хальччен ӗҫсе ывӑннӑччӗ.
ГЕОРГИ. Ҫапла, саншӑн часрах ӗҫсе пултӑр. Йӑмӑкун пурнӑҫӗ кайран хӑть те чикеленсе кайтӑр. Эсир мӗн пурте пӗрле кавар турӑр-и мана хирӗҫ? Пуҫӑрсем пур-и сирӗн ҫук-и? Ҫураҫнӑ хӗр вӑл, кӗҫ-вӗҫ ак туй килет.
КЕША. Туй, туй... Мӗне кирлӗ кун пек туй, туй вӑхӑтӗнчех тепринпе тухса тарас килет пулсан? Сана итлесе хур кӑна куран. Хам та ухмах, нимӗнле туй та тумалла пулман, юратӑн

çынпа тухмалла та каймалла пулнă. Паянхи пек пулмастăмăр та. *(Алăка уçса кăшкăрать.)* Ильнар, кĕр, илсе кай Светана юратан пулсан.
ГЕОРГИ. Эс кунта хуçаланса ан тăр, ху ача çурат та хуçалан.
НИНА. Чарăнăр-ха паян.
КЕША. Çуралнă ман, ӳсет. Эс вара мана унран уйăртăн. Юратнă çынран та, ачаран та уйăртăн. Хырăмлă хĕр, хырăмлă хĕр... Юри ят сартăр ун çинчен. Пĕтĕм пурнăçа тӳнтерле çавăртăр эсир манăнне. Халь ак йăмăкăн пурнăçне тӳнтерле çавăратăр.
НИНА. Туршăн та пулин чарăнăр-ха паянхи кун. Эх, Георги, хамăрах йăнăш тăватпăр пуль çав.
ГЕОРГИ. Çитĕ, çитĕ кун пирки. Тек çур  сăмах та илтем мар. Эпĕ тупса паман ăна Пулмантăш ачине, хăйсем пĕр-пĕрне тупнă.
СВЕТА. Ху Ильнара качча пама килĕшмерĕн те. Ват хĕр пулса юлмаллаччĕ-и манăн? Пирĕн курсри хĕрсем пурте качча кайса пĕтрĕç.
КЕША. Телейсĕр арăм пуличчен ват хĕр пулса юлсассăн лайăхрах. Мĕне кирлĕ сана халĕ тепри, кун кунлама-и?
НИНА. Эх, ырăран тухмарĕ иккен паянхи çил-тăман.
ГЕОРГИ. Манпа тавлашса тăриччен хирĕç кайса пăхасчĕ санăн хăть. Муш хир варринче путса ларнă та шăнса ларaççĕ пуль.
КЕША. Мĕнпе каяс манăн унта: Жигулипе-и, çуран-и? Пыр тух та кай ху, эс чи маттурри вĕт пирĕн килте.
ГЕОРГИ. Ах, пĕри хама хумарăр вĕт, пĕри савăнтаракан çук ашшĕ-амăшне.

*(Ильнар кĕрет.)*

Эс татах килтĕне-ха?
ИЛЬНАР. Георги абăй, эс тулькка хĕрсе ан кай, эп хыпар тума кăна килтĕм. ДРСУ машинисем халь кăна иртсе кайрĕç, Баиша çити çул уçрăмăр, малалла кайнин усси çук теç. Вара пирĕн яла туй килмелле, Пулмантăша çити çул уçса парăр тархасшăн теп. Манăн савни качча каять паян теп. Çук теç, унталла çула пичетлесе лартнă пек  юр хӳсе лартнă теç.

ГЕОРГИ. Вăт ача тăк ача. Маттур ача пур çĕре те ĕлкĕрет вĕт. Çыншă та тăрăшать, ашшĕ-амăшне те сума сăвать, теприншĕн те чунне пама хатĕр. Ак камран тĕслĕх илмелле сирĕн.
НИНА. Ачине хамăр та мухтатпăр та-ха...
ГЕОРГИ. Хĕл варринче чĕрĕ чечек тупать те вăл. Леш вара çула кĕрт хӳсе лартнă тенĕ те кăмака çине хăпарса ларнă ĕнтĕ.
НИНА. Çула хупланă пулсан ху та каяймастăн ĕнтĕ.
ГЕОРГИ. Тухса килеймесен хыпар тăваç ăна.
СВЕТА. Телефонне тытмаç вĕсем.
НИНА. Ку çил-тăман телефон пралукĕсене те татрĕ пуль.
ГЕОРГИ. Пĕр телефонне тытмасан теприне тытать. Халь сирĕн кашнин аллинче телефон.
СВЕТА. Мобильникне те тытмасть вăл.
КЕША. Вышка çинчи турилкки персе аннă ĕнтĕ.
ГЕОРГИ. Турилкки мар, ăсĕ персе аннă унăн. Эп хам авланап пулсан вуник çухрăма хырăмпа та пулин шуса çитеп. Çамрăк чухне аннĕр патне Матака кашни каç ултă çухрăм унталла çуран кайнă, ултă çухрăм каялла килнĕ.
КЕША. Мучелей ачисем хĕнесе ямасчĕç-и вĕсен ялĕ витĕр утнă чух?
ГЕОРГИ. Эп калаçма пĕлнĕ чăвашпа чăвашла, тутарпа тутарла, çамрăкпа çамрăкла, ватăпа ватăлла. Мĕн вăл вуникĕ çухрăм çамрăк çыншăн? Икĕ уй урлă каçатăн та, çитетĕн те.
КЕША. Пурте эс мар çав, пурте сан пек пуласшăн та мар.
ГЕОРГИ. Аннĕре качча илнĕ кун мĕнлерех йĕпе-сапаччĕ, вĕсен кассине пырса кĕме те çукчĕ. Эп вара ăна гусеницаллă тракторпа та пулин кайса илсе килтĕм. Мĕншĕн тесен юратнă, авланасах тенĕ. Эсир ăна халь туй кунне те шухăшăрсене улăштаратăр. Тьфу! Пулмантăш кунтан таçта мар. Туй халăхне илсе килеймесен хăть пĕччен те пулин кил. Ятне ту хăть, курăнса ил ял халăхĕ умĕнче. Паян туй ан килтĕр-ха, ыранах пĕтĕм ял калаçать Георги хĕрне тиркенĕ, çавăнпа туй пулман тесе. Илтменнине те илтнĕ туса кăтартаç, пулманнине те пулнă туса кăтартаç. Йăмăкна хам çавăтса унта леçсе яраймастăп ĕнтĕ эпĕ. Ăслă-тăнлă çын пулсан çавна хăть ăнланмалла пуль ун.

КЕША. Ма леçместĕн, леç Пулмантăш ачине çав тери кĕрӳ тăвассу килет пулсан. Ыттисем сан кăмăлна каймаççĕ вĕт. Сана килĕшекеннине качча каймалла, сана килĕшекеннине качча илмелле. Тен пирĕн пурнăça та хăвах пурăнса ирттерен?
ГЕОРГИ. Эп сана Чĕрес Петя хĕрне ан ил терĕм-и? Ан ил терĕм-и? Салтака кайса килмесĕр авланмастăн терĕм, çав кăна. Вĕсем вара сăмси айне шăлма вĕренеймен, хӳрисене çĕклесе те хунă. Шкул пĕтернĕ вĕт вĕсем! Шкул пĕтерсен тем тума та юрать терĕç пуль. Ура çине тăн-тăн тăраç ăна малтан, ав, Ильнар пек, кайран авланма шутлаç.
КЕША. Халь ак салтакран та килнĕ, ура çине те тăнă, анчах мĕн усси? Ача теприн хыççăн «атте» тесе чупать.
ГЕОРГИ. Эппин ун амăшĕ сана юратман, юратнă пулсан теприне качча каймасчĕ.
КЕША. Ун пек эсир ăна ялĕпе кышлаттăр хĕр пуççăн хырăм йăтать тесе. Çавăнпа илекен пур чухне теприне качча кайнă та. Мана илтермерĕр вĕт. Ав вăл та илекен пур чухне часрах качча кайса юласшăн. Кайран ӳкĕнетĕн вĕт ху, ӳкĕнетĕн.
ГЕОРГИ. Чĕрес Петя хĕрĕсĕр пуçне урăх хĕр пулмарĕ ĕнтĕ саншăн.
КЕША. Пулмарĕ çав, атте, пулмарĕ, пулас та çук. Ху ма аннене качча илтĕн, ма урăххине илмерĕн?
ГЕОРГИ. Танлаштарчĕ! Аннӳ... Аннӳ вăл ялĕпе пĕрреччĕ. Мĕн ялĕ, тĕнчипе пĕрреччĕ.
КЕША. Валя та тĕнчере вĕрре кăна çав, тек çук ун пекки.
СВЕТА. Ильнар та пĕрре çеç, атте.
ИЛЬНАР. Света та пĕрре çеç, Георги абăй.
ГЕОРГИ. Ах çунтараç та çунтараç, кама кăна хутăр-ши?
НИНА. Юратман çынпа пурăнас килмест пуль çав, ачасене те ăнланма пулать, Георги.
КЕША. Аттене пăхса ан тăр, Света, тух та кай ав Ильнарпа.
ГЕОРГИ. Кай иккен. Ман сăмахран иртсе тухса каян пулсан, манăн киле текех килсе кĕнĕ ан пултăр.
КЕША. Килместпĕр те. Тухса каятпăр та акă, килместпĕр. *(Каять.)*
НИНА. Эй, Турă, мĕн япали ку? Çемье хутшăнас вырăнне саланса пырать. Кеша, чарăн!... *(Тухать.)*

2 картина. *Лидя пурăнакан çурт. Кайри пӳлĕм. Пĕчĕк сĕтел çинче çавра çăкăр. Тумбочка çинче аккордеон ларать, ăна тĕрленĕ витĕпе витнĕ. Личукпа Лена апат-çимĕç турилккисене тепĕр пӳлĕме йăтаççĕ.*

ЛИЧУК. Ахалех хĕр илме каймарăн эсĕ, Лена.
ЛЕНА. Эп те кайсан сана кунта кам пулăшать?
ЛИЧУК. Капла та икĕ кун ман çумра тăпăртататăн. Кăштах сана та кайса савăнсан юратчĕ. Халь сĕтел хатĕр, çăкăр-тăвар хатĕр. Туй килессе кĕтмелли çеç юлчĕ.
ЛЕНА. Пӳртре хатĕр те, хапха умне юр хӳсех тăрать. Ак кăштах канатăп та юр хырма тухатăп. Юлашкинчен хăть пулăшса юлам сана, Личакка. Атту ырантан сирĕн пата маншăн çул хупăнать.
ЛИЧУК. Ак тата, каларăн та. Ма хупăнмалла тет ун? Эс маншăн хамăн хĕр пекех çывăх. Йывăр вăхăтра яланах юнашар.
ЛЕНА. Тек юнашар пулаймăп çав. Сирĕн пата каççан çĕнĕ кин тем шутлĕ.
ЛИЧУК. Лайăх хĕр эс, Лена, качча кайсан ырă çын тĕлне пулмалла пултăр. Вăрттăн каласан, ĕмĕтре хамăн кине санах тăвасшăнччĕ те вĕт. Вася, ав, урăххиине тупса янă.
ЛЕНА. Телейлĕ унăн пулас арăмĕ.
ЛИЧУК. Эс те хăвăн телейне тупатăн-ха. Куçусене кăштах вылят, Васян юлташĕсем, ав, миçен килнĕ. Пĕринчен тепри ытармалла мар вĕт.
ЛЕНА. Çапла, лайăх ачасем, анчах чĕрере урăххи çав манăн, Личакка.
ЛИЧУК. Эппин пур-ха сан та чун савни. Эп саншăн савăнатăп, Лена.
ЛЕНА. Савăнмалли питех çук çав, вăл каччă мана юратмасть.
ЛИЧУК. Сан пеккине те тиркет-и? Вăт ухмантей. Санран лайăххине тупатăп тет-ши? Сан пекки вĕт ялĕпе те çук, таврара та çук.
ЛЕНА. Урăххине качча илет пулсассăн, эппин пур. *(Çăварне хупласа.)* Çук-çук, Личакка, эп Вася пирки мар, урăххи пирки. Вăл та паян авланать.

*(Юрикпе Зоя кĕреççĕ.)*

ЮРИК. Тинех çитрĕмĕр иккен.
ЗОЯ. Кĕме юратчĕ-ши?
ЮРИК. Ну, тустарать те тустарать. Нихăçан та чарăнассăн туйăнмасть ку çил-тăман.
ЗОЯ. Хир варринче вилсе выртатпăр пуль терĕм. Кăна пĕлнĕ пулсан Оренбургран пĕр кун маларах тухмаллаччĕ.
ЮРИК. Кам пĕлнĕ вĕт çакăн пек пуласса.
ЛИЧУК. Тухман çын тухсан тăман тухать тесе ахалтен каламаççĕ иккен. Ав кама пула паян çанталăк тулашать.
ЮРИК. Эп юри паян çеç çитмелле тухасшăн пултăм. Туй вăхăтĕнче килсе кĕрсе ывăла сюрприз тăвасшăнччĕ. Туй килмерĕ-и-ха?
ЛЕНА. Çук.
ЗОЯ. Уншăн мар-ха эс, млтанхи арăму çĕр каçма кĕртмесрен хăрарăн. Туй умĕн хăваласа ямасчĕ пуль ĕнтĕ, мĕн каласан та ывăлĕн ашшĕ-çке. Ну, здравствуй, Лида.
ЛИЧУК. Здрасте.
ЮРИК. Вара эп сире паллаштармарăм та вĕт-ха. Зоя, паллаш, ку манăн пĕрремĕш арăм, Личук. Ку ак Зоя, манăн...
ЛИЧУК. Çирĕм пĕремĕш арăму пуль.
ЮРИК. Ну, миçемĕшне каламасан та юрĕ, хальхи арăм тейĕпĕр.
ЗОЯ. Вăл хăй миçе арăмпа пурăннин шутне те маннă.
ЛИЧУК. Паллă ĕнтĕ, кашни хĕл урăх арăмпа.
ЮРИК. Мĕн тумаллаччĕ-ха манăн, ху от ворот поворот тăватăн та. Ăçта та пулин пурăнмалла вĕт çыннăн. Йыттăн та хăйĕн йăви пур.
ЛИЧУК. Мана тĕнче касакан арçын кирлĕ мар. Эс вара чупкăн, çӳрен тĕнче тăрăх лайăхран лайăха шыраса.
ЮРИК. Пусарăнтăм, Личук, пусарăнтăм. Зояпа ак çичĕ хĕл каçрăмăр. Çапла-и, Зоя?
ЗОЯ. Те пусарăнсах пĕтрĕн ĕнтĕ эс, те çук. Ялан Личук та Личук тет. Личук аплаччĕ, Личук каплаччĕ. Ниепле те манаймасть-ха сана, Лида.
ЛИЧУК. Вăл манмасть пуль те, эп тахçанах маннă. Ывăлу та аса та илмест. Килмессе те пултарнă, туй сансăрах иртетчĕ.

ЮРИК. Мĕнле килес мар-ха, пĕртен-пĕр ывăл авланать те. Ваççашăн эп тем тума та хатĕр. Çурçĕр патшине çĕнтерсе çитрĕмĕр те.
ЗОЯ. Чăн та сывă çитсе ÿкесси пулмасть пуль тенĕччĕ. Пашъельне çул уçакан машинпа çитрĕмĕр. Малалла каймастăп, солярка пĕтрĕ, каялла çитмелĕх кăна тет.
ЮРИК. Юрать Валери пирки аса илтĕм. Салтакра пĕрле служит тунăччĕ унпа.  Личук, эсĕ ăна пĕлен, пирĕн туйра каччă çумĕ пулнăччĕ вăл. Пĕлетĕп Валери ахутана çÿренине, илтнĕ унăн снегоход пуррине. Вăт çапла-çапла теп, ывăл авланать, вилсен те çитмелле теп.
ЗОЯ. Пирĕн патăмăрта выртса кайăр тет, ку çанталăкра йытă та тула тухмасть тет.
ЮРИК. Пурпĕр итлерĕ вĕт. Хисеп тăваççĕ çав мана. Эппин япăх çынах мар-ха эп те.
ЗОЯ. Нихăçан та ун пекки çине ларса курманччĕ. Тăмана та ним вырăнне хумасть, çырми-çатрине те. Вĕçсе çитнĕ пек туйăнчĕ, арась.
ЛЕНА. Çул çинче туй машинисене тĕл пулмарăр-и?
ЮРИК. Вăл пире вăрман хÿттипе кÿрсе ячĕ.
ЗОЯ. Хирпе кайсан аташса кайăпăр тет. Чăн та унта нимĕн те курăнмасть. Юрать çуни çĕмĕрĕлсе лармарĕ. Пĕр чарăнса ларсан ним мар шăнса вилен, арась.
ЛИЧУК. Вилсен пытараççĕ, хăрамалли çук.
ЗОЯ. Лида, эс мана çаплах палламарăн-и-ха?
ЛИЧУК. Паллаштарчĕ вĕт.
ЗОЯ. Эх, Чугунова, мантăн пулать-ха шкулти хăвăн конкурентна. Соревнованисенче иксĕмĕр ăмăртса йĕлтĕрпе чупнисене астăватăн-и хăть?
ЛИЧУК. Чим-ха, Зоя... Зоя Солдатенко, Шамкай хĕрĕ.
ЗОЯ. Арась, арась, Чугунова.  Шкула кăна мар, районта та пире çитекенни çукчĕ вĕт.
ЛИЧУК. Çапла çав, çапла, халь аса илтĕм. Шупашкартан  та çĕнтерсе килĕмĕр вĕт пĕррехинче. Ну, пурпĕр эсĕ манран хытăрах чупаттăн.
ЗОЯ. Ун чухне çамрăк пулнă, вăй пулнă.
ЛИЧУК. Ялан пĕр-пĕринпе сапана каяттăмăр çав.
ЗОЯ. Пире çитекенни чăнах та çукчĕ ун чухне. Пĕремĕш вырăна яланах е эсĕ, е эпĕ тухаттăмăр.

ЛИЧУК. Чăвашла лайăх калаçма вĕреннĕ эс. Шкулта вĕреннĕ чухне пĕрре те чăвашла калаçмастăнччĕ.
ЗОЯ. Эп Оренбург чăвашне качча кайнăччĕ. Вунпилĕк çул пĕрле пурăнтăмăр та, унпа пурăнса чăвашах çаврăнтăм. Шел, ир çĕре кĕчĕ, йывăр тăпри çăмăл пултăр.
ЛИЧУК. Эсĕ халĕ те манпа сапана кайма чарăнман иккен-ха.
ЗОЯ. Вара хăй вĕт чăвашпа пурăнтăм, вырăспа пурăнтăм, пушкăрт хĕрарăмĕпе те, тутар хĕрарăмĕпе те пурăнса куртăм. Ирçе хĕрарăмĕпе те пурăнса пăхас килет терĕ те, пурăнса пăхар вара терĕм. Ну, хăшĕ сана ытларах юрататчĕ-ха, каласа пар.
ЮРИК. Пирвайхине çитекен çук, ху пĕлен.
ЗОЯ. Çитекен çук пулсан ма ку таранччен тĕнче касса çӳретĕн вара ху, тахçанах таврăнмаллаччĕ ун патне. Кĕртетĕн пуль, Лида?
ЛИЧУК. Халь тин çук ĕнтĕ. Вăл кайнă çула тахçанах вĕлтĕрен пуснă.
ЗОЯ. Вĕлтĕренне лăскаса пăрахма та пулĕ-ха ăна.
ЛИЧУК. Лăскас килмест çав, алла çунтарать.
ЗОЯ. Юратсассăн çунтарнине пăхмастăн.
ЛИЧУК. Кама, ăна юрататăп-и? Таси паха! Мана тĕнче касакан упăшка кирлĕ мар. Пĕрле пурăнма качча кайнă эп ăна, уйрăм пурăнма мар.
ЗОЯ. Юратман пулсан паян кунччен пĕччен пурăнмастăнччĕ ĕнтĕ. Çав-çавах манман-ха эс ăна.
ЛИЧУК. Мĕн, мана  çураçакан пулман тетне? Мана качча илес текенсем халь те туллиех. Хамăр ялсем те темиçен килчĕç, Шамкай ирçи те, Хураката мишерĕ те. Хăвай вырăсĕ виçĕ хут килчĕ. Кăмăла тупас тесе ак çавраках уралла сĕтел парса хăварчĕ.
ЮРИК. Кăмăлна тупаймарĕ-им-ха апла?
ЛИЧУК. Хам васкамарăм, малтан ывăла авлантарас-ха терĕм. Паян ак Васяна авлантаратăп та, кайран хам та качча каятăп.
ЗОЯ. Тĕрĕс те, ват çынсем мар вĕт эпир пĕччен пурăнма. Хĕрĕх пиллĕкре хĕрарăм çулланса кăна çитет-ха. Ак арçынсем умĕнче саркаланса çӳреме сан валли манран парне. *(Мамăк тутăр парать.)* Ятарласа сан валли тесе хам алăпа хам çыхрăм.

ЛИЧУК. Тавтапуҫ, Зоя. Кун пек тутăр ҫукчĕ-ха ман.
ЗОЯ. Вăт тӳрех ҫамрăкланса кайрăн.
ЮРИК *(аккордеон патне пырса).* Кăларса ывăтман-ха, числă вырăнтах ларать. Астăватăн-и, Личук, салтакран илсе килнĕччĕ эпĕ ăна, Ангарскран.
ЛИЧУК. Кăларса ывăтасшăнччĕ те, Вася музыкăпа интереслене пуҫларĕ. Кайран вĕренме те ҫав енĕпех кайрĕ.
ЮРИК. Кам ывăлне пĕлĕр! Манăн юн вăл, ху пĕлен.
ЗОЯ. Купăс калама пĕлекенсене хам та юрататăп ҫав, Юрике те ҫавăнпах кĕртрĕм. Ман вилнĕ упăшка та чаплă вăйҫăччĕ, пĕр туйран та хăвармасчĕҫ ăна. Тĕрĕссипе каласан хăнаран хăнана ҫӳресе ĕҫсех пĕтрĕ ĕнтĕ. Карланки ытлашши янкăччĕ. Юрикех апла мар. Ăна та ялта пĕр ĕҫкĕрен те хăвармаҫҫĕ, ҫапах черкке патне ҫипҫăнсах каймасть. Кăмăл ҫĕклемелĕх тытса парать те, ҫитет тет, луччĕ юрласа ларатпăр тет. Лида, сан ҫинчен те юрă ҫырнă-ха вăл. *(Юрике.)* Юрласа кăтартатăн пуль?
ЮРИК. Итлекен пулсан юрлăп, итлекен пулмасан...
ЛИЧУК. Хут ҫине тем ҫырма та пулĕ, ҫынна ĕҫпе хаклатăп эп. Вăл хăй телейне ютра шырарĕ, юррисене те ютри арăмĕсене, ютри ачисене  юрласа патăр.
ЮРИК. Вăт шăтăк пуҫ, мĕн ларатăп вара эп? Личук , манăн та сан валли парне пур вĕт. *(Кĕске кунҫаллă кăҫатă кăларать.)* Тăхăнтартсах ярам-ха, уру сарăлсах кайтăр. *(Личука кăҫатă тăхăнтартать.)*
ЗОЯ. Арҫынсем ҫăвăр пекех ҫипҫăнаҫ ĕнтĕ капла.
ЛИЧУК. Пĕр расхутпа хамăн та ыранах качча каяс пуль апла.
ЮРИК. Эп кăна кил хушшинче ҫӳреме тесе йăвалларăм.
ЛИЧУК. Мĕн, ҫын ҫине тухма юрамасть-и?
ЮРИК. Ҫын ҫине тухма вăрăм кунҫалли кирлĕ. *(Тепĕр икĕ мăшăр кăҫатă кăларать.)* Анчах кусене ывăлпа кин валли парне пултăр тесе илсе килтĕм. Шăнса ан пăсăлччĕр, ҫамрăкран упраччĕр хăйсен сывлăхне. Мĕн каласан та пĕртен-пĕр ывăл вĕт вăл ман.
ЛИЧУК. Пĕртен-пĕрре? Тен ҫĕр те пĕрре вĕсем сан? Эх, чупкăн, ҫак чупкăна качча кайнă вĕт-ха эп. Мĕн тупнă-ши ун ҫумĕнче, ухмах пуҫ?
ЮРИК. Улшăнтăм, Личук, улшăнтăм, халь эс манпа мухтанма пултаратăн.

ЛИЧУК. Мухтанмасăр, мухтанса пĕтерейместь. Пĕр харăс миçе арăмпа пурăнма пултаратăн та, ма мухтанас мар.
ЮРИК. Ман арăм шӳтлеме ăста, Зоя, ху пĕлен. Ну лайăх пурăнаттăмăрччĕ те унпа.
ЛИЧУК. Лайăх кăна-и... Çын ăмсанса тăмалла лайăх. Çулла кăшт курăнса илеттĕн те, хĕлĕпе таçти тĕнчере. Хушăран тата арăмĕсем ачисемпе паллаштарма килетчĕç.
ЮРИК. Вара Пулмантăшра мансăр та кăçатă йăвалакансем нумай, конкуренци пысăк, пысăк укçа тума çук.
ЛИЧУК. Манран, ывăлунтан аякра пулас тенĕ эс, ак ма кайнă. Хĕрхеннĕ пулсан кăшт урăхларах пулаттăнччĕ. Халĕ те кĕртес те çукчĕ эп сана. Ывăлна тав ту, вăл чĕнесшĕн пулчĕ. Туй ĕмĕрте пĕрре пулать та, чĕн ĕнтĕ терĕм.
ЮРИК. Маттурккасем те вĕт-ха эсир манăн. Зоя, каларăм вĕт сана манăн арăм ылтăн тесе. Эс шанмастăн, сана алăк уратинчен те каçармасть тетĕн. Ахалех сана пăрахса кайрăм пулмалла. Кил-ха ĕлĕкхинее аса илсе кăшт ыталаса илем.
ЛИЧУК. Вăт ку кирлĕ мар. Аллусене ирĕке ярсан чăн та алăк урати леш еннех тухса ӳкен, ывăлна та курса юлаймăн. Килтĕн пулсан кутна хĕс те лар хĕр илсе килессе кĕтсе. Ăнлантăн-и?
ЮРИК. Ăнланмасăр. Ăнланмалла калатăн та-ха, епле ăнланмастăн. Пур енчен те маттур вĕт-ха эс, Личук. Вăт иксĕмĕр пĕрлешнĕренпе  çирĕм пĕр çул иртрĕ тесе те калаймастăн. Ĕлĕкхи пекех маттур, ĕçчен, чипер. Кăмăлĕ тата мĕнле çемçе унăн, ху пĕлен.
ЗОЯ. Пĕр калама тытăнсан каласа пĕтерейместь вара сан синчен, Лида. Ун çинчен çеç ан калаç-ха, ман çинчен те шутла-ха теп. Çук, Личука çитекеннине тĕнчипе шырасан та тупасси пулмасть тет.
ЛИЧУК. Сӳтĕлет пуль ĕнтĕ.
ЮРИК. Калаçма юрататăп çав эп, калаçсан ывăнни сисĕнмест пек. Кăçатă йăваласси вăл çăмăл ĕç мар, ху пĕлен. Ирех мунчана кĕрсе ларатăн та, алăсем туйми пуличченех кĕççе йăвалатăн. Кăçал пĕр ял çыннисене кăçатă йăваласа тăхăнтартан, тепĕр çул тепĕр ял çыннисене. Пусарăнса ларма вăхăт пулман ман. Атя пĕр килнĕ япала сан валли те мĕн те пулин туса хăварам. Эп тем тума та маçтăр, ху пĕлен. Атту кунта сана пулăшакан та, хĕрхенекен те çук пуль.

ЛИЧУК. Хĕрхенекенни тупăннă. Эх, чупкăн,  хĕрхеннĕ пулсан пăрахса та каймастăнччĕ эс.
ЮРИК. Ху текех килсе ан кĕр терĕн те.
ЗОЯ. Вăл сана юри кăна каланă ĕнтĕ ун чухне, эс сăмсуна уснă та, ăшă сăмахна хĕрхеннĕ. Эпир, хĕрарăмсем, хăлхапа юрататпăр вĕт.
ЮРИК. Эх, çунат айĕнчи чĕпĕ пек пурăнаттăмччĕ вĕт сан çумăнта. Зоя патĕнче те çавăн пекех пурăнатăп. Иксĕр те ылтăн эсир манăн.
ЗОЯ. Эс ху та ылтăн, аллусем ылтăн сан. Ăçтан кăна килмеççĕ пуль ун патне кăçатă йăвалаттарма. Вăт тата та пур теç ăстасем, анчах Юрка пек çемçе йăвалакан çук теç. Çавăнпа сана пурте юратаççĕ те.
ЮРИК. Мана çамрăк чухне те пурте юратнă. Астăватна, Личук, урама тухнисене. Мĕнле аккордеона тăсса яраттăм, пĕтĕм ял хĕрĕ ман тавра вĕлле хурчĕсем пек пухăнатчĕç. Пурте çумарах ларасшăнччĕ, пурте куç хĕсеччĕç, ху пĕлен. Эп вара Личука кăна суйласа илтĕм. Сан пек сасăлли ялĕпе те çукчĕ, пуринчен те ирттереттĕн вĕт. Чуна тыткăна илеттĕн сассупа. Мĕнле кăна юрă пĕлместĕнччĕ. Все терĕм, Личуксăр пуçне мана никам та кирлĕ мар терĕм. Эх, çав кунсене каялла тавăрас пулсассăн-и... Каялла кĕртетĕн-и?
ЛИЧУК. Мĕн, тĕнче касса ывăнтăн-и?
ЮРИК. Ывăнтарать çав. Тăван çĕр турта пуçларĕ.
ЛИЧУК. Тăван çĕр... Тăван çĕрне тахçанах ылмаштарнă эсĕ. Мана та ылмаштарă, ывăлна та ылмаштарă. Миçе ача пăрахса кайрăн-ха ĕнтĕ çапла?
ЮРИК. Хам пĕлни Вася çеç.
ЛИЧУК. Пĕлменни миçе? Эх, çутăлтарса кăна ярăттăмччĕ те сана...

*(Машина килсе чарăннă сасă.)*

Хĕр илсе те килчĕç. Эх, сирĕнпе калаçса ларса... Пăрăн-ха турăша илем.

*(Туй ачисем кĕреççĕ.)*

ВАСЯ. Каялла таврăнăтмăр.

СЕРЖ. Унта каяймастăн, çул çине тем çӳллĕш кĕрт хӳсе лартнă.
НИКОЛЯ. Путса лартăмăр та, машинасене аран кăлартăмăр.
МИШЕЛЬ. Ыш, пăрлантăм эп. C est tout, je ne diplacerai pas. (Вуланать:Се ту, жё не депласерэ па! – Куçарăнать: Все, я больше с места не сдвинусь!)
ВАСЯ. Пăчăрлă патĕнче вăйлă лартнă, çул уçмасăр кайма çук.
ЛИЧУК. Çулне ырансăр та уçмĕç те, хĕре мĕнле илсе килес тетĕр?
ВАСЯ. Хĕр тармасть-ха вăл. Кунта шăнса хытрăмăр, анне.
СЕРЖ. Эх, манăн пӳрнесем... Пĕтрĕ иккен чаплă композитор пуласси. Инструмента та тытаймап капла.
НИКОЛЯ. Леночка, ăшăт-ха пире, шăнса вилетпĕр атту.
МИШЕЛЬ. Леночка, ăçта-ха сан чи ăшă вырăну?
ЛЕНА. Ай, чарăнăр, илĕр аллăрсене.
ВАСЯ. Mon ami,  casser a vous.  (Мон ами, кассе а ву. – Ребята, перестаньте.)
ЛЕНА. Вася, хăтар мана.
ВАСЯ. Ну, çитĕ ĕнтĕ атсем. Ав кăмака çумне тĕршĕнĕр.
СЕРЖ. Чее те мар. Ун хĕр çумне тĕршĕнмелле, пирĕн кăмака çумне. Nous voulons aussi l amour. (Ну вулон осси лямур - Мы тоже любви хотим: Базиль.)
ВАСЯ. Cherchex la femme. (Шерше ля фам. - Ищите себе другую.)
НИКОЛЯ. Базиль, эс авланакан каччă пулас. Халех юта ан ытала.
ВАСЯ. Лена ют мар вăл, манăн чи-чи çывăх... кӳршĕ.
СЕРЖ. Да, хĕр çумне тĕршĕнчĕ те, туй та кирлĕ мар.
МИШЕЛЬ. Basil, je n ai pas compris. Est ce que la noce suspendra? (Базиль, же нэ па компри. Эс кё ля нос сюспандера? – Базиль, я что-то не понял. Что, на сегодня свадьба отменяется?)
НИКОЛЯ. Ма пулмасть? Пĕр туй пулмасан тепĕр туй пулать, Лена килĕшсен.
ЛЕНА. Тем пекех килĕшĕттĕм те, анчах мана фата илсе паракан тупăнмарĕ çав.
НИКОЛЯ. Эпир ĕлĕкхилле пĕркенчĕк пĕркентеретпĕр те сана, пулчĕ те. Килĕшетĕн-и?

ЛЕНА. Пĕркенчĕк айĕнче хĕр йĕрри йĕмелле. Ман йĕрсе мар, савăнса качча каяс килет. Тата эпĕ хĕр йĕррин сăмахĕсене те пĕлместĕп.
МИШЕЛЬ. Эпир сана вĕрентетпĕр.
СЕРЖ. Сан вырăнна Мишель йĕрет. Килĕш ĕнтĕ пĕркенчĕк пĕркенсе кĕрекене ларма.
ЛЕНА. Эп качча каякан хĕр мар вĕт. Ку кĕрекене урăх хĕре кĕртсе лартма хатĕрленĕ.
НИКОЛЯ. Вася урăххине илеймест вĕт-ха, пирĕн вара паянах туй тăвас килет.
СЕРЖ. Чăн та сĕтел хатĕр, эпир хатĕр, тата мĕн кирлĕ? Ну-ка, камараде, стройся. *(Каччăсем пĕр йĕркене тăраççĕ.)* Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă. Халь пиртен пĕрне суйласа ил те, туй пуçлатпăр та.
НИКОЛЯ. Мана, мана суйласа ил, Леночка.
МИШЕЛЬ. Mademoiselle, je ici. (Мадмуазель, же иси – Барышня, я тут.)
СЕРЖ. Мишель, сан Мэри те пур-ха, манăн акă никам та çук. Леночка мана качча тухать. Çапла вĕт, Лена?
ЛЕНА. Çук.
СЕРЖ. Pourquoi? (Пуркуа? - Почему?)
ЛЕНА. Сăмсу ытлашши каçăр сан.
СЕРЖ.. Сана лаптаккисем килĕшерех параççĕ-и? *(Сăмсине лапчăтса.)* Ак çакăн пеккисем-и? Пятачоксем. Нуф-нуф-нуф!
МИШЕЛЬ. Ман сăмса санăннинчен лапчăкрах, Лена. Наф-наф-наф!
НИКОЛЯ. Ман вара хӳре кукăртарах. Леночка, кунта эп кăна сана тивĕçли. Ниф-ниф-ниф!
ЛЕНА. Чарăнăр-ха эсир паян, шăлт пĕчĕк ачасем. Ача садне çеç леçмелле сире. Ай! Вася, хăтар!
ВАСЯ. Çитĕ, атсем. Эп Ленана пурпĕр никама та памастăп.
НИКОЛЯ. Ак тата! Эс харăс Светана та, Ленана та качча илесшĕн мар пуль те?
СЕРЖ. Караул! Базиль тĕнчери хĕрсене пурне те хăй ярса илеть.
МИШЕЛЬ. Хăть Леночкăна пар пире, Базиль.
НИКОЛЯ. Пăрланчĕ иккен ман чĕре.
ЗОЯ. Шухă ачасем, пĕринчен тепри ытармалла мар. Ăçтан тупăннă эсир капла?

ЮРИК. Личук, ачасем шăннă, вĕрилентер-ха унта çуттине.
ЗОЯ. Пăрăçласах ĕçтермелле вĕсене.
ЛИЧУК. Чăн та, мĕн пăхса тăратăп-ха эпĕ?
МИШЕЛЬ. Чим, maman. Эпĕ пĕр коктейль рецептне пĕлетĕп, шăннинчен пит лайăх пулăшать. *(Кĕрсе каять.)*
ЮРИК. Ма çӳхе тăхăнса кайрăр вара хăвăр?
НИКОЛЯ. Эпир çамрăк-çке.
СЕРЖ. Туя кам тăлăп тăхăнса каять?
ВАСЯ. Ак, батя, эс те пур-и çĕр çинче? Мĕнле килме пĕлтĕн? Атсем, курăр, батя килнĕ.
ЮРИК. Ӳссе кайнă эсĕ, арçын пулса çитнĕ. Кил-ха хăть ыталаса илем. *(Ыталанаççĕ.)*
ВАСЯ. Эс вара ватăлса кайнă. Эп сана кăшт çамрăкрах тесе.
ЮРИК. Ак кăçатăсем тăхăнăр-ха, урăрсем ăшăнччĕр.
НИКОЛЯ. Ой, валенки... Кăна эп тăхăнап.
СЕРЖ. Кăна эпĕ.
МИШЕЛЬ. *(Пăрăç тĕвекен савăтпа тухать.)* А ман валли? Ман та урасем шăннă.
НИКОЛЯ. Сан валли, ав, алăк кутĕнче ларать.
МИШЕЛЬ. Ну, Николя... Чее те эс. *(Кăçатă тăхăнать те юрласа ташлать.)*
Валенки-валенки,
Ой, не пошиты, стареньки.
Нельзя валенки носить.
Не в чем к миленькой ходить.
ПУРТЕ. Кăçатă, кăçатă,
Эх, шăтса пĕтнĕ, кивелнĕ.
Кăçатă, кăçатă,
Эх, шăтса пĕтнĕ, кивелнĕ.
Oh, Nicolas, Nicolas (О, Николя, Николя)
La moison ne quitte pas (Ля мэзон не ките па)
Les jeune filles qui viendront (Лё жен фии ки вьендрон)
Elles d abord embresseront et puis s enfluiront
(Эль дабор амбрасирон э пюи санфлюирон).
ВАСЯ. Паллаш, батя, кусем ман чи çывăх юлташсем: Мишель, Серж тата Николя. Пурте музыкантсем.
ЮРИК. Чăвашсем мар-и?
МИШЕЛЬ. Интернационалистсем.
СЕРЖ. Гибридсем.

НИКОЛЯ. Мĕн эсир? Патриотсем. Ют чĕлхнне алла илсе хамăр чĕлхепе çураçтаракансем.
ЮРИК. Мĕнле апла?
НИКОЛЯ. Эпир пĕлтĕр Базиль... Каçарăр, сирĕн ывăлăр Вася пуçарнипе «Camarade» ятлă ушкăн йĕркелерĕмĕр. Çулла акă диплом илетпĕр те, çĕршыв тăрăх гастрольсене каятпăр. *(Мишеле.)* Фу, мĕскер тĕвен эс?
МИШЕЛЬ. Антивирус. Mails la reve la plus chere pour nous… (Мэ ля рев ля плю шер пур ну… - Но самая заветиная мечта у нас…)
НИКОЛЯ. Çапла, пирĕн чи çутă ĕмĕт Франције çитесси. Вăт каятпăр та Мишелĕн Парижне, хамăр юрăсемпе, кĕвĕсемпе, ташăсемпе французсене астарса яратпăр. Анчах чеен хытланатпăр. Юрăсен куплечĕсене çуррине французла, çуррине чăвашла юрлатпăр.
СЕРЖ. Эх, Парижанкасем пире килĕштерсе пăрахнипе асса каяççĕ.
НИКОЛЯ. Пуринчен ытларах Мэри. Мишельпе Мэри Парижра балет шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ. Ак Мэри курать те эс мĕнлерех ташланине, вылянине, юрланине, хăйĕн театрне пăрахсах пирĕнпе пĕрле Раççейе килет. *(Мишель кĕрсе каять.)*
СЕРЖ. Ман хыççăн вара çур Париж килет, малтан вĕсене туйтаратăп та Раççей мĕн иккенне...
НИКОЛЯ. Чăваш мĕн иккенне.
СЕРЖ. Пирĕн кунта урăхла шкул, кунта урăхла сывлăш, кунта урăхла ирĕк, кунта урăхла юрату...
НИКОЛЯ. Кунта урăхла юрă, кунта урăхла кĕвĕ... Акă мĕнпе астаратпăр вĕсене. Пирĕн юрăсене илтеççĕ те, чĕрисем сарăлсах каяççĕ. Сăмахĕсем, сăмахĕсем мĕне тăраççĕ теç. Анчах чăвашла ăнланакан никам та çук. Ирĕксĕрех словарь шыраç. Пĕтĕм Парижа çаврăнаç, чăвашла-французла словарь ниçтан та тупаймаç.
СЕРЖ. Унтан Шупашкара шăнкăравлаç, халех тупса парăр теç. Вăт француз та чăвашла вĕренме пуçлать вара.
НИКОЛЯ. Чăвашĕ вара французла.
ЮРИК. Эсир капла та французла лайăхах перкелешетĕр пулмалла.
НИКОЛЯ. Французла пире Мишель вĕрентет.
СЕРЖ. Эпир ăна чăвашла.

НИКОЛЯ.. Мишель, мĕнле унта, коктейль хатĕр-и?
МИШЕЛЬ *(сасси).*Часах пулать...
СЕРЖ. Пирĕн Мишель Парижра пурăннă, ун ашшĕ дипломат пулнă.
НИКОЛЯ. Анчах дипломатсен мĕнле вĕсен? Дипломат дипломат мар, разведчик пулнине сисеççĕ те лере, тархасшăн теç, ак сана 48 сехет. S il vous plait aller a Moscou. (Силь ву пле алле а  Моску. – Пожалуйста, уезжайте в Москву.)
МИШЕЛЬ *(тухать те каллех çухалать).* Вĕсене пула эпĕ балет шкулне пĕтерейменрĕм. Je soumettrai Paris quand meme. (Жё суметрэ Пари кан мэм. - Я все равно покорю Париж?)
НИКОЛЯ. Ан хăра, Мишель, эс унта балет шкулне пĕтерейменнишĕн. Пирĕнпе вĕрентĕн, Раççей шкулĕ яланах сумлă пулнă. Эс халь универсал. Ташлама кăна мар, эс халĕ тем тума та пултаратăн.
СЕРЖ. Паллах çитетпĕр Парижа, Мишель. Ахаль кăна та мар, аваципе кĕтсе илет пире Париж.
ЮРИК. Пит тăрăшсан темле ĕмĕт те пурнăçланать.
СЕРЖ. Эпир тăрăшатпăр та.
НИКОЛЯ. Эпир пĕрле темле йывăрлăха та çĕнтеретпĕр. Пирĕн девиз...
ПУРТЕ *(харăс).* Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн!
СЕРЖ. Паллах чаплă музыка çырма хавхалантаракан кирлĕ. Базиль ак хавхалантараканнине тупрĕ.
НИКОЛЯ. Пĕрре кăна та мар.
ВАСЯ. Николя...
НИКОЛЯ. Je garde le silance, Basil. ( Же гарде лё силанс, Базиль – Молчу, молчу, Базиль?)
СЕРЖ. Ак авланнă хыççăн Базиль  çавăн пек юрăсем çырма тытăнать, апат та кирлĕ мар, инструмент çеç алăра пултăр.
ЗОЯ. Сăмах çăмхине сӳтме маçтăр вара эсир.
ЛИЧУК. Эп ăнланасран юри французла калаçаççĕ-ха вĕсем. Астăвăр, камарадесем, эсир тепре килнĕ çĕре хам та словарь тытса ятарласа французла вĕренетĕп –ха. Вара манран нимĕн те пытараймăр.
НИКОЛЯ. Maman, мана эсир капла та эпир калаçнине веçех ăнланатăр пек туйăнать.
ЛИЧУК. Сăмахне ăнланмасан та чĕрепе туятăп сирĕн шухăшăра.

ВАСЯ. Батя, эс яланлăха-и е çил-тăман пек çула май çеç.
ЮРИК. Аннӳ мĕн калать вĕт.
ВАСЯ. Анне... Анне мĕн калатăр ĕнтĕ вăл? Анне чăтать вăл. Вăрçать те каçарать те, кăмăла та тупма пĕлет. Юрать хăть эсĕ пур манăн, анне. Ылтăн анне вăл манăн, ман çут хĕвелĕм, пирĕштийĕм. Сана вара мĕскер калам-ши, батя. Кашни çын хăйĕн шăпине хăй аллипе тăвать. Эс ак хăвăн шăпуна пирĕнсĕр курнă, эпир вара,,, Эпир сана кашни çул кĕтнĕ, эс çук та çук. Кайран кĕтме пăрахрăмăр, эс хăвăн телейне ютра тупнă пуль терĕмĕр. Тен кӳрентĕмĕр те хушăран, анчах кайран... Кайран манăçăнать. Кӳренни те иртет, юрату та иртет. Пĕлместĕп мĕн юлать ăшра.
ЮРИК. Тăванлăх туйăмĕ юлать.
ВАСЯ. Вăт кăна тĕрĕс каларăн. Мишель, пулчĕ-и-ха? Ярса пар-ха пире хăвăн коктейльна, манăн тост пур.
МИШЕЛЬ *(бокалсемпе коктейль илсе тухать).* Все, пулчĕ.
ЗОЯ. Шăрши сăмсана кăтăклать.
ВАСЯ. Ну, тĕл пулнă ятпа, батя. Анчах ку бокала эп саншăн мар, аннешĕн ĕçетĕп. Ылтăн анне эс манăн, юратса пĕтерейместĕп эп сана? Ĕмĕр-ĕмĕр пурăн, телейӳ сан вышкайсăр пултăр. Пирĕн вара сана савăнтармалла кăна пултăр. Саншăн, аннеçĕм.
МИШЕЛЬ. Браво, Базиль!
ЮРИК. Эп те аннӳшĕн ĕçетĕп. Унран лайăх хĕрарăм çĕр çинче тек çук. Саншăн, Личук. Саншăн, ывăлăм. Ак сана валли парне. *(Укçа тĕрки парать.)*
ВАСЯ. Мĕн ку?
ЮРИК. Каттаччи чупма машина илмелĕх. Пĕтĕмпех лайăх пултăр сирĕн пурнăçра.
СЕРЖ. Тăхтăр! Mon ami, nous camarades, (Мон ами, ну камараде – Друзья, товарищи) эпир кунта инсториллĕ саманта çитрĕмĕр. Nous Bazil mentena… (Ну Базиль ментена – Наш Вася сегодня…). Каçарăр, паян пирĕн Вася çĕнĕ çемйе çавăрать.
НИКОЛЯ. Çавăрасшăн...
СЕРЖ. Çавăратех пуль тетпĕр. Анчах та ун çинчен туйра калаçăпăр. Манăн халĕ ку бокала çак çемйешĕн, Вася амăшĕшĕн, ун ашшĕшĕн çĕклес килет. Maman, пире кунта килсе çӳреме яланах лайăх, тăван киле туртнă пекех туртать кунта. Мĕншĕн тесен сирĕн чун уçă тата эсир çак килĕн

ăшшине упрама пĕлетĕр. Çавăнпа та эпир сирĕн умăрта пуçа таятпăр.
ЛИЧУК. Тавтапуç, Сережа. Коля, Миша, сире те тавтапуç. Хамăн ачасем пекех эсир маншăн. Йывăр вăхăтра ялан пулăшма килеç вĕсем. Ушкăнпа килсе кĕреççĕ те, пĕтĕм ĕççене туса хăвараç. Эп савăнатăп Васян çакăн пек юлташсем пурришĕн. Эсир пурри маншăн хăйех телей.
МИШЕЛЬ. Bravo, maman.
ВАСЯ. Тавах, аннеçĕм.
СЕРЖ. Merci que vous etes. (Мерси ке вуз эт - Спасибо вам за то, что вы есть?)

*Ачасем фанфары ĕнĕрлеç.*

ЛИЧУК. Çийĕр атя, çийĕр, килти пек пулăр.
ЮРИК. Шăрши мĕне тăрать. Чылай пулать , Личук, эсĕ пĕçернĕ çăкăра активменни.
ЛИЧУК. Мĕн тăвас тетĕр-ха, тата тухса прăхатăр-и? Хĕр кĕтет вĕт. Ашшĕ-амăшĕ те пăшăрханать пуль. Тем шутлĕç тата, авланасшăн мар тейĕç.
ЗОЯ. Вĕсем мĕн, çанталăк мĕнлине курмаççĕ-и?
МИШЕЛЬ. Il fait tel froid. (Иль фе тель фруа - Там такой мороз…)
СЕРЖ. Унта куçа уçса пăхма та çук.
НИКОЛЯ. Тухса кайсан та пурпĕр çул çинче путса ларатпăр.
ЛИЧУК. Хĕре пурпĕр мĕнле те пулин илсе килмелле-çке. Çанталăка пула авланаймарĕ тесен çын ĕненмĕ.
ЮРИК. Машинапа каяймасан тен гусеницаллă тракторпа кайса илсе килмелле, çуна çаклатмалла та. Тăлăпсем пĕркенсен шăнсах вилмĕпĕр.
ВАСЯ. Трактор та çăрăлса тухаймасть вăл ашăмран.
СЕРЖ. Базиль, а тен сана заочно авлантармалла? Вĕсем унта туй туччĕр, эпир кунта. Тăман чарăнсассăн мĕнле те пулин тĕл пулатăр.
НИКОЛЯ. Чăн та, апатсене мĕн сая ямалли.
ЛИЧУК. Ачасем, эсир шӳтлеме ăста, паллах, анчах япалан йĕрки пур. Туйа тăвасах пулать. Вася, пыр Лена ашшĕпе кайса калаç.
ВАСЯ. Лена ашшĕпе? Мĕн пирки?

ЛИЧУК. Хӗре илсе килес пирки. Ун ашшӗ бульдозерпа ӗҫлет. Ҫул уҫса патӑр сире Асанкассине ҫити.
МИШЕЛЬ. Леночка, сан папа бульдозерист?
НИКОЛЯ. Бульдозерӗ умӗнчех ларать-ҫке. Ма маларах шутламан-ха эпир ун пирки?
СЕРЖ. Мадмуазель, Базиль авланасси халь пӗтӗмпех санран килет. Аҫуна ӳкӗте кӗртмеллех. Атя иксӗмӗр кайса унпа калаҫса килер. Базиле часрах авлантарар та, кайран иксӗмӗр... Camarade, a smoking pour moi aussi. (Камараде, э смокинг пур муа осси – Товарищи, закажите и  мне смокинг.)
ВАСЯ. Serj, refroid! Je ne te laisserai pas avec elle. (Серж, рефруа! Же не те дессерэ па авек эль. - Серж: остынь: я тебя с ней не пущу?)
СЕРЖ. Voila ou en sont les choses. (Вуаля, у ан сон ле шоз… - Ну и дела…)
ЛЕНА. Эп унпа калаҫрӑм ӗнтӗ, анчах тракторӗ ҫӗмрӗк ҫав унӑн.
ЛИЧУК. Мӗнле ҫӗмрӗк? Ӗнер кӑна хапха умне яп-яка туса пачӗ-ҫке.
ЛЕНА. Тракторӗ ӗҫлет, анчах бульдозерӗн кӗреҫи ҫӗкленмест тет.
СЕРЖ. Ма ҫӗкленмест вара вӑл?
НИКОЛЯ. Тен тӑрӑшсассӑн ҫӗклеме пулать?
ЛЕНА. Гидравликине тем пулнӑ тет.
МИШЕЛЬ. Мӗн, давлени чакса ларнӑ-и?
СЕРЖ. Эп давлени хӑпартмалли меслет пӗлеп. Кӑштах ӑна тыткаламалла, ачашламалла, ҫепӗҫ сӑмахсем каламалла. Вара вӑл чӑтса тӑраймасть те чанк кӑна ҫӗкленет.
ЛЕНА. Ҫӗкленмест ҫав, темӗскерӗ ҫийӗнсе пӗтнӗ: те поршенӗ, те цилиндӑрӗ терӗ.
МИШЕЛЬ. Цилиндӑрӗ ҫийӗнсе пӗтнӗ?
СЕРЖ. Ах, ма ытла хӑвӑрт ҫийӗнсе пӗтнӗ-ши ӗнтӗ вӑл.
НИКОЛЯ. Ҫап-ҫамрӑк пуҫпа ырми-канми ӗҫленӗ ӗнтӗ.
СЕРЖ. Ма хӑйне ним чухлӗ те шелемен-ши?
ЛЕНА. Аттен траторӗ ҫӗнӗ мар ҫав, СССР-ти чухнехиех.
МИШЕЛЬ. Все, авланасси пулмасть санӑн паян, Базиль.
СЕРЖ. Эх, туйра мӗнле ташласшӑнччӗ паян, пулмарӗ.
НИКОЛЯ. А тен цилиндӑрне улӑштармалла?
СЕРЖ. Чӑн та, ҫӗнӗ цилиндр пур чухне киввине вӑркӑтмалла, Базиль. Est ce que tu n'as pas compris qui tu aimes ia plus,Sveta ou

Lena? (Эс ке тю на па компри ки тю эм плю, Света у Лена? - Или ты еще не разобрался кого больше любишь: Свету или Лену;)
ЛЕНА. Çĕнĕ цилиндăр çук çав ун?
НИКОЛЯ. Мĕнле вăл çук, юнашарах-çке. Базиль, эс мĕн хытса тăран? Il faut battre le fer pendant qu il est chaud. (Иль фо бартэ лё фер пандан киль э шо. - Куй железо пока горячо.)
ВАСЯ. Все, çитĕ сире çынран кулса.
СЕРЖ. Эпир кулмастпăр, эпир сана авлантарасшăн.
ВАСЯ. Эсир авланнă чухне эпĕ те сиртен кулăп-ха. Эппин бульдозер ĕçлемест?
СЕРЖ. Бульдозерĕ ĕçлет...
НИКОЛЯ. Цилиндăрĕ ĕçлемест.
ВАСЯ. Тата мĕнле вариантсем пур?
ЗОЯ. Юра, ху кайса калаçса пăх, тен мĕн те пулин шутласа тупатăр.
ЮРИК. Гидравлика ĕçлемесен çул уçаймасть ĕнтĕ вăл. А тен лашапа? Çывăхра камăн лаша пур?
ЗОЯ. Лаша путать унта.
НИКОЛЯ. Эпир ăна йĕлтĕр тăхăнтаратпăр.
СЕРЖ. Тен йытăсем кӳлсе каймалла?
ВАСЯ. Шавкка йытăсене-и?
МИШЕЛЬ. Тен верталет пур камăн та пулин.
СЕРЖ. Мишель, кунта Франци мар. Ялан Парижпа ан тĕллен.
ВАСЯ. Мĕнле те пулин май тупмалла-çке.
ЛЕНА. Авланмалла мар сан, Вася.
ЛИЧУК. Эс, Лена, кирлĕ мара калаçса ан тăр кунта. Мĕнле вăл авланмалла мар?
ЛЕНА. Вĕсен çемьеллĕ пурнăçĕ пăтăрмахран пуçланать, Личакка, ку ырра мар. Курмастăр-им, çанталăк та вĕсене пĕрлештересшĕн мар. Пĕрлешсен те телейĕсем пулмаç ак.
ЛИЧУК. Çанталăка пăхса телей килсен...
ЛЕНА. Юратса авланмасть-çке вăл.
ЛИЧУК. Эс тата ăçтан пĕлен: юратса-и, юратса мар-и? Авланать – эппин юратать.
ЗОЯ. Юрату вăл хут çинче кăна çав. Теприсем юратсах пĕрлешеççĕ, анчах çулталăкранах уйрăлаççĕ. Хисеплемелле пĕрне-пĕри, тек ним те кирлĕ мар çемьеллĕ пурнăçра.
НИКОЛЯ. Çук, эп сирĕнпе килĕшме пултараймастăп. Юрату çак тĕнчене тытса тăрать.

МИШЕЛЬ. Юрату пулмасан ма пурăнатпăр вара эпир çĕр çинче?
СЕРЖ. Юрату асамлă япала вăл. Кам çук тет, вăл унăн техĕмне туйса курман. Пĕтĕм чаплă композиторсем, художниксем, писательсем юратăвăн чи асамлă туйăмне туйса курнипе çеç хăйсен шедеврĕсене çырма пултарнă.
НИКОЛЯ. Юрату пулман пулсан эпир те çĕр çине çуралаймастăмăр, эсир те.
СЕРЖ. Юрату вăл ик чĕре пĕрлешни...
НИКОЛЯ. Çӳл тӳпене ухни...
МИШЕЛЬ. Юрату вăл гармони. Гармони пур – юрату пур, гармони çук – юрату çук.
ВАСЯ. А вĕт Мишель тĕрĕссине калать. Шăпах гармони çитсе каймасть мана. Светапа пирĕн вăл юрату мар, пĕр-пĕрне килĕштерни кăна пулас. Хам авланатăп, ăшра вара музыка пачах та çук. Параппан çеç тӳнккет тĕлли-паллисĕр. Мĕн пулса иртет манпа, хам та пĕлместĕп. Vos conseiles, mes amis. (Во консей, мез ами. - Дайте совет, мои друзья?)
МИШЕЛЬ. Il faut se marier par amour. (Иль фо се марье пар амур. - Жениться надо по любви.)
НИКОЛЯ. Alors, ne te maries jamais. (Альёр, не те мари жаме. - Или вообще никогда не женись?) Мĕн усси авланни?
ЛИЧУК. Ытлашши нумай пĕлетĕр-ха эсир юрату çинчен. Тĕрĕс કаларĕ Зоя, чăн малтан пĕр-пĕрне хисеплемелле, пурăнмалла юнашарах, савăнăçне те хуйхине пĕрле пайламалла. Тата мĕн кирлĕ çемйере? Çĕкленӳллĕ сăмах кирлĕ мар çемьеллĕ пурнăçра, çĕр çине анмалла. Тепри сăмахпа темле те юратать пуль те, чунĕпе вара ют сана. Тарать арăмĕнчен те, ачинчен те. Ав юратса авланакан ларать. Ăçта халĕ унăн юратăвĕ? Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачине юратать,  ачисем ашшĕ-амăшне – вăт ак çакăн пек юратăва эп ăнланатăп. Урăхла юратăва ăна писательсем çеç шутласа тупнă тата сирĕн пеккисем, пурнăç мĕнне ăнланманнисем.
ЮРИК. Писательсем те пурнăçранах илсе çыраççĕ.
ЛИЧУК. Сан пурнăçунтан илсе çыраççĕ-и? Санăн хăть чĕнмесĕр ларасчĕ. Эс никама та юратман, мана та, ачуна та. *(Зоя çине кăтартса.)* Мĕн, халь ăна юрататăп тетĕн-и? Куçунтан пăхсанах паллă вĕт эсĕ мĕнлерех çын пулни. Çирĕм пĕр çулта ачуна виççĕ ыталаса курман та эс, атте-и? Шăрчăк

пек пĕр арăм патĕнчен тепĕр арăм патне сиккелесе çӳреме пĕлетĕн, çавă пур. *(Васяна.)* Эс те аçу пек пуласшăн-и? Ăçта пулнă вăл туй кунне йĕкĕт шухăшне улăштарни?
ВАСЯ. Эп атте пек пуласшăн мар çав, анне.
ЛИЧУК. Эппин мĕн ларан? Илсе кил арăмна, хăть те çуран кайса илсе кил, анчах та унсăрăн ан таврăн.
МИШЕЛЬ. Çуран каймастпăр эпир.
СЕРЖ. Çуран шăнса вилме тухса кайни кăна.
НИКОЛЯ. Эпир музыкантсем, пире шăнма юрамасть. Карьера пуçланичченех пĕтет.
СЕРЖ. Çĕнĕ Моцарт пĕтет.
НИКОЛЯ. Çĕнĕ Шаляпин.
МИШЕЛЬ. Çĕнĕ Нуриев.
СЕРЖ *(Васяна ыталаса).* Çĕнĕ Есенин.
ЛИЧУК. Хăратăр пулсан эппин юлăр, ав Ленапа иккĕш каяç.
ВАСЯ. Чим-ха, анне, эп чăн та шутламасăр авланма шут тытрăм пулмалла. Тен ку çил-тăман та ахальтен мар, тен ку мĕнле-тĕр паллă? Мĕн-тĕр каласшăн вăл мана. Вăт веçех сире пула ку, mon ami. (мон ами – друзья).
ЛИЧУК. Кайрĕ иккен пурнăç анаталла.
НИКОЛЯ. Комеди, честно говоря
СЕРЖ. Çук, лирика, романс.
МИШЕЛЬ. Опера «Метелица».
НИКОЛЯ. Тен урăх хĕр тупатпăр? Мишель, эс пирĕн çинчен тĕлĕк курсан, çав яланах пурнăçланать. Кĕрекере кампа эс куртăн Базиле тĕлĕкӳнте: Светапа е урăххипе?
МИШЕЛЬ. Шел пулин те Базиле те, Светана та курман эп, пачах урăххине курнă.
НИКОЛЯ. Туй пулмастех пулас.
ВАСЯ. Между прочим эп авланма шутламанччĕ те, эсир пуçа пăтратса ятăр ун чухне. Et qui a imagine cette discussion? (Э ки а имажинэ сет дискюсьон? - И кто придумал этот спор?) Эп вара, ухмах, çаклантăм сирĕн вăлтана?
НИКОЛЯ. Эрехĕ нумайрах пулчĕ пуль çав вăл каç.
СЕРЖ. Эпир Çĕнĕ çул каçхине вăйă ирттертĕмĕр пĕр-пĕрне чи юратакан мăшăр пĕр уйăхран авланмалла тесе. Тăватă мăшăртан чи юратаканни Базильпе Светлана пулчĕç.
МИШЕЛЬ. Сăмах панă – закон.
СЕРЖ. Сăмаха тытмасан кам эс? Арçын мар.

ЛИЧУК. Ача-пăча! Пĕçерккĕ паракан çук сире! Çирĕм пĕре çитрĕр, çавах ача ăсĕ кайман. Вăйă выляса авланаç!
ЗОЯ. Авланма шутланă, тĕрĕс тунă, арçын авланмасăр пурăнаймасть.
НИКОЛЯ. Ма пурăнаймасть? Эп сăмахран, авланма шутламастăп. Кам çине авланмалла унта, кама качча илмелле?Хĕрсем халь каччăсенчен ирттереç туртас енĕпе те, ĕçес енĕпе те, тем чирĕсемпе те чирлеç тата. Эпĕ хамăн ача амăшне вĕсенче курмастăп.
ЛЕНА. Пĕтĕм хĕр ун пек мар-çке.
НИКОЛЯ. Леночка, тен эсĕ апла мар та пулĕ, анчах ман тĕле сан пеккисем лекмен.
ЛИЧУК. Авланман арçын вăл арçын мар. Хĕр ăна хăйне пырса качча илсе каймасăр вырăнтан хускалаймасть. Йĕкĕт авланмасан, хĕр качча каймасан тата мĕн тума çуратса янă сире аçăрпа аннĕр? Çемье çавăрса ача çуратма пуль, вĕсен йăхне тăсма.
НИКОЛЯ. Çемье çавăрсан проблемăсем хутшăнаç. Капла ирĕкри кайăк пек. Toute la paix pour vous! Rien vous derange. (Тут ля пе пур ву! Рьен ву деранжю. - Весь мир перед тобой: никто не мешает.)
ЛИЧУК. Кайăк та йăва çавăрать, çăмарта та тăвать, чĕпĕ те кăларать. Эп хĕтĕртмен сана авланма, ху шутланă.
ВАСЯ. Ман пуç çаврăнсах кайрĕ, нимĕн те ăнланмастăп. Тен тата пĕрер бокал? Мишель, юлчĕ-и унта санăн тата?
ЛИЧУК. Ĕçсен пуçа ухмах шухăш кăна кĕрет. Килĕшмесĕрех авланас темен пуль ĕнтĕ вăл хĕр çине. Эх, шăпăрлансем, хăçан ăс кĕрет сире?
СЕРЖ. Хаваслă пурăнас килет-çке-ха, maman. Ну, пĕрлешчĕр, пурăнса пăхчĕр, килĕшмесессĕн уйрăлаç, теприн çине авланать.
ЛИЧУК. Çын шăпипе çавăн пек выляççĕ-и вара, Сережа? Ăçта-ха ман ухват, çиччас сире пурне те тăн кĕртеп. Хĕр вĕт арçын çине шанса качча тухать, тĕрек пултăр тесе, ĕмĕр унпа ĕмĕрлеме. Эсир вара... Çăмăл тетĕр пуль пĕрре качча кайнă хĕре уйрăлнă хыççăн пурăнма. Ни телейĕ, ни хисепĕ. *(Васяна.)* Ху мĕнле çитĕннине манса кайрăн-и? Эп мĕнле нуша курнине мантăн-и? Çамрăк-и, ватă-и хĕрарăм вăл хĕрарăмах. Унăн та камăн та пулин хӳттинче пулас килет. Пĕр

харăс хĕрарăм шутĕнче те, арçын шутĕнче те пулас килмест. Эс вара...
ВАСЯ. Анне, каçар мана. Çиччас каятăп эпĕ Света патне. Йĕлтĕр унчченхи вырăнтах-и? Эсир вара манпа пырсассăн пырăр, пымасассăн...
СЕРЖ. Базиль, тăхта, сăмах пур. *(Вăрттăн.)* Ман шутпа сан унта каймалла мар. Ман шутпа сан халлĕхе вуçех те авланмалла мар. Пĕлетĕн-и Света вăл...
ВАСЯ. Мĕн вара вăл?
СЕРЖ. Ну, эп ху та пĕлетĕн пуль тенĕччĕ. Çĕнĕ çул каç та шӳт вырăнне çеç йышăнтăм эс авланма шут тытнине. Паян ак ху та иккĕленме тытăннипе кăна калас терĕм. Çитменнине Ленапа эсир... Ну, сисĕнет эсир пĕр-пĕрин енне туртăнни.
ВАСЯ. Мĕн резина тăсса тăратăн, кала мĕн Света?
СЕРЖ. Ну, хăвах пĕлетĕн пулĕ, цилиндăрĕ ун çĕнĕ мар.
ВАСЯ. Мĕн?
СЕРЖ. Эп Рамиспа пĕр пӳлĕмре пурăнатăп-çке. Ун патне яланах пĕр тутар ачи килет, Ильнар ятлă.
ВАСЯ. Вара мĕн, килнĕ-кайнă.
СЕРЖ. Кайман çав. Вăл килсен эпир çывăрма юнашар пӳлĕмсене каяттăмăр, вăл вара унта хĕрпе юлатчĕ. Эп вăл кампа юлнине курман, пĕррехинче куртăм.
ВАСЯ. Вара камччĕ вăл хĕр?
СЕРЖ. Света.
ВАСЯ *(малтан ăнланмалла мар кулать, кукленсе ларать, кайран сасартăк тăрса Сержа кăкăрĕнчен ярса тытать).* Ма халь тин? Санран ыйтатăп, ма халь тин? J’ai compte sur vous. J’ai vous pris pour mes amis. (Жё компте сюр ву, жё ву при пур мез ами. - Я на вас надеялся: я считал вас своими друзьями. Ничего не таил от вас.) Эх, эсир те çав... *(Тухса каять.)*
МИШЕЛЬ. Basil, attende moi. (Базиль, аттанд муа. – Базиль, подожди.)
НИКОЛЯ. Ques-ce que tu lui as dit? (Кеске тю люи а ди? - Что ты ему сказал?)
СЕРЖ. Rien. (Рьен. – Ничего.)
НИКОЛЯ. Нимĕн те каламасан çын çавăн пек улшăнмасть. Базиль!..
ЛЕНА. Вася! Мĕн пулчĕ ăна?
ЛИЧУК. Вася!..

*(Пурте тухса каяççĕ.)*

## 2 ПАЙĔ

**3 картина.** *Пĕрремĕш картинăри курăну. Георги кĕрет.*

ГЕОРГИ. Çанталăк та лăпланчĕ, сас-чӳ вара пурĕпĕр çук.
НИНА. Кеша та курăнмасть-и?
ГЕОРГИ. Çук.
НИНА. Вăл тата ăçта кайрĕ-ши? Шăнса вилĕ мĕскĕн ача.
ГЕОРГИ. Килет, пĕчĕк ача мар.
НИНА. Килмеп тесех тухса кайрĕ те.
ГЕОРГИ. Чĕрес Петя хĕрĕ патне вашлатрĕ пулĕ-ха. Мĕн пĕлсе унта кайса çын çемйине аркатса çӳрет-ши? Миçе çул иртрĕ, лăпланмалла пек ĕнтĕ. Çук вĕт, хăй валли инкек шырасах çӳрет. Лешин упăшкипе миçе хутчен чĕп-чĕрĕ юн пуличчен çапăçрĕç ĕнтĕ, вăл пурпĕрех каять.
НИНА. Хăйĕн ачине курас килет пуль çав.
ГЕОРГИ. Те унран-ха вăл, те урăххинчен. Ак чăтайман енне вĕлерсе пăрахаççĕ-ха пĕрре.
НИНА. Тем ан калаç-ха эс тата. Ун чухнех иккĕшне пĕрлештермеллеччĕ çав.
ГЕОРГИ. Пĕрлештернĕ пулсан кĕвĕçме тытăнатчĕ: эп салтакра, эс ирĕкре тесе. Мĕн, малтанах чикĕрен каçакан хĕр кайран та лăпланса пурăнатчĕ тетĕн-и? Ак авлантăр халь, кам чарать? Тĕнчере хĕр пĕтмен.
СВЕТА *(тепĕр пӳлĕмрен тухать).* Юратманнипе никамăн та пурăнас килмест, атте.
ГЕОРГИ. Эс тата ма тумна улăштартăн?
СВЕТА. Ма тесессĕн туй пулмасть.
ГЕОРГИ. Мĕнле вăл пулмасть?
НИНА. Ан хуйхăр, хĕрĕм, тăман чарăннă, ак çула уçаççĕ те, туй кĕрлесе те çитет.
СВЕТА. Килсессĕн те туй пулмасть. Эп юратмастăп ăна, урăххине юрататăп, анне. Атте Ильнара хирĕç пулнипе кăна Васяна качча кайма килĕшрĕм. Пĕр институтра вĕреннипе тĕлпулкаланă - çав кăна, анчах та юратмастăп эп ăна. Антив ват хĕр пулса юлам юратман çынна кайиччен.

ГЕОРГИ. Эп тупса паман сана вăл йĕкĕте, хăвăр пĕр-пĕрне тупнă. Халь эс мана ял çинче намăс кăтартасшăн-и? Тĕрĕссипе каласан вăл ача мана хама та килĕшмерĕ, анчах халь тин каллĕ-маллĕ тунă ан пултăр. Тетӳ çăвара пĕçерни те çитет.
*(Ильнар кĕрет.)*
Ильнар, эс каллех килтĕнем-ха? Мĕнле ача пултăн эс? Пуçăн кăларса ярсан кутăн та пулин килсе кĕретĕн вĕт.
ИЛЬНАР. Хыпар пĕлтерме килтĕм, Георги абăй. Дорожниксене чĕнсе илтĕм, Пулмантăша кайрĕç, кĕçех çул çатма пек яп-яка пулать. Итлесшĕн мар, солярка пĕтрĕ, ирччен кĕт теç. Вара хам заправит тăватăп теп, çиййĕнчен çур тонна тырă паратăп теп, тин согласи пачĕç. Юлашкинчен Светашăн пĕр ырă ĕç тăвам-ха терĕм. Ан хăра, Света, шăл çыртса та пулин сана качча паратăпах. Синĕн Васяна та утăртăп килем.
СВЕТА. Ăна лартса килме кирлĕ мар. Çитсен çаплах кала, хĕр илме ан килччĕр. Кайнă вăл, ялтан тухсах кайнă те, туй пулмасть те.
ИЛЬНАР. Чăнах пулмасть-и? Эс качча тухмастăн-и Пулмантăш малайне?
СВЕТА. Манăн никампа та пулас килмест, санпа кăна пулас килет, Ильнар. *(Ильнара ыталаса илет.)*
ИЛЬНАР. Манăн та санпа кăна пулас килет çав, Света.
ГЕОРГИ *(вĕсене сирсе).* Эсир каллех хăвăр юрра пуçларăр-и-ха?
СВЕТА. Эп юрататăп ăна, атте. Тутар-и, чăваш-и - саншăн пурпĕр мар-и, ачусем телейлĕ пулччĕр.
ГЕОРГИ. Эсĕ мĕн калаçан? Халь-халь ак туй килет. Ку таранччен мĕн туса тăрать-ши тата леш?
НИНА. Çул уçасса кĕтеççĕ пуль.
ГЕОРГИ. Мĕне? Çула виçĕ кунсăр та уçаймасан? Халь мĕн пирĕн виçĕ кун кĕтсе лармалла-и ăна? Çĕнĕрен апат хатĕрлемелле-и, татах укçа тăкмалла-и? Мемме вăл, пиçмен пашалу. Çил-тăманран хăрать те, пурнăçне мĕнле шайлаштарса пырасшăн-ши? Специальноçне те вĕт путлине суйласа илмен, вăйça вĕренет. Купăс каласах çемйине тăранатарап тет-ши? Вăл клубра купăс каласа ларакан пулать ĕнтĕ, эс библиотекăра кĕнеке парса ларакан. Авланма

та ячĕшĕн кăна авланать пуль те-ха. Арçынлăхĕ те çавăн чухлĕ кăна ĕнтĕ ун, çанталăкран хăрать пулсан... А тен килмест те вăл? Тен хирĕçнĕ эсир?
СВЕТА. Çĕркĕ лайăхах уйрăлтăмăр.
ГЕОРГИ. Вăт, уйрăлнă çав,  пĕрлешичченех уйрăлнă. Ашшĕ те унăн çавах. Авланса пурăнам пекки тунă та,  тепри патне вĕçтернĕ. Ывăлĕ те ăна хурас пулсан, мĕн пĕлсе туй туса тăккаланмалла тет вара ман?
ИЛЬНАР. Тăкакĕсене веçех хам саплаштаратăп, Георги абăй, хĕрне çеç мана пар. Ма мана хирĕç-ха эсĕ, начар малай мар вит-ха эп. Образовани бар, иномарка бар, собственный дело бар, грузовой кăна дюрт машина бар, комбайн бар, трактор бар, алтмăш биш гектар дир бар. Эс пурпĕрех тиркен.
ГЕОРГИ. Тиркеместĕп эп, эс  лайăх ача пулнине пит лайăх пĕлетĕп. Сан пеккине кăнтăрла хунарпа шырасассăн та тупаймастăн. Чăн-чăн арçын, чăн-чăн хуçа.
ИЛЬНАР. Значит кия ӳкэ биресĕсмĕ?
НИНА. Хĕр яла кайсан хамăра та лайăх пулать, Георги.
ГЕОРГИ. Нина!..
ИЛЬНАР. Сире те лайăх пулать, пире те лайăх пулать. Ялта та рахат пурнăç туса парап сире. Хăвах шутла-ха, Георги абăй, мăнукусем кашни кун сан патна чупа-чупа килекен пулаç. Кукаçей, пар вутă çурса парап теç, кукамай пар урай çуса парап теç. Пĕр малайĕ ман тĕслĕ, тепĕр малайĕ сан тĕслĕ. Кăзлар тата, кăзлар... Ак çакăн пекки те пулать, ак çакăн пекки те, ак кун пысăкăшши те. Эх, якши була вит, Георги абăй.
ГЕОРГИ. Якши була, анчах пулмасть çав ун пек.
ИЛЬНАР. Мĕншĕн пулмасть? Сан тĕсли те, Нинаппа тĕсли те, Света тĕсли те пулать.
ГЕОРГИ. Мĕншĕн тесен сан ачусен амăшĕ Света мар, урăххи пулать.
ИЛЬНАР. Урăххи кирекми. Килĕш-ха ĕнтĕ, атту сана пула хусах пулса юлатăп вит. Братсем авланса пĕтнĕ, аппасем качча кайса пĕтнĕ. Манăн кăна арăм çук. Ман çулта арăм пулмасан начар япала вит.
ГЕОРГИ. Ман хамăн та тен сана кăна кĕрӳ тăвас килет пуль те, анчах... Ма чăваш мар-ха эс? Вырăс пулсан та сăмахсăрах

парӑттӑм, ирҫе пулсан та турткаланса тӑмӑттӑм. Тутара вара памастӑп.
ИЛЬНАР. Кам мана калать татар тесе? Эп тепӗр чӑвашран та лайӑхрах калаҫап. Юрлама та пӗлеп чӑвашла, ташлама та... Юрласа кӑтартам-и?
Шынгыр-шынгыр шыв юхат та,
Щынгыр-шынгыр шыв юхат,
Шыв юхат та, шыв юхат та чул юлат.
Эх, Георги абый, чул кӑна юлат вит, чул купи кӑна юлат хам хыҫран. Авлансан хӑть ачасем юлаҫҫӗ. Эпӗ вит тӗрӗссипе Светана вӑрласа кайма та пултарнӑ, тульккӑ ман сиртен согласи илсе, пеххил илсе Светана арӑм тӑвас килет. Ҫитменнине эпӗ Эсенте пӗрремӗш татар малай мар чӑваш хӗрне илекенни: Фиркат Люсяна илнӗ, Имам Раяна илнӗ. Пурте лайӑх пурӑнаҫ, никам та тиркешмест.
ГЕОРГИ. Вӗсем лайӑх пурӑннине те пӗлетӗп, анчах Светана пурпӗр тутар малайне памастӑп. Мӗнле-ха манӑн хӗр сӑхсӑхас вырӑнне аллаха пуҫ ҫаптӑр? Илемлӗ мар. Чӑваш ачине тупнӑ, чӑваш ачинех кайтӑр.
ИЛЬНАР. Татар ҫын мар-и?
ГЕОРГИ. Тӗн урӑх сирӗн.
СВЕТА. Эпӗ хам тӗне улӑштаратӑп.
ГЕОРГИ. Тӗн улӑштарать иккен вӑл. Ах ытла ҫӑмӑлттайла шутлатӑн та. Малтан тӗн улӑштар, кайран аҫу-аннӳне...
ИЛЬНАР. Пирӗн тӗн ма килӗшмест вара сана? Аллах та Христос пекех ҫынна ыррине кӑна вӗрентет.
ГЕОРГИ. Ҫапла пуль те, анчах та урӑх турӑ сирӗн.
НИНА. Турри пуриншӗн те пӗр пуль те-ха...
СВЕТА. Атте, ан чар пире пӗрле пулма.
ГЕОРГИ. Ҫитӗ-ха сире, ҫавра ҫил пекех хупӑрласа илтӗр. Памастӑп терӗм вӗт, эппин памастӑп. Эсир мӗн, ман ята ярасшӑн-и? Пулмантӑш ачи килсе кӗрсен манӑн мӗн тес? Леш тата ӑҫта ҫӳрет-ши? Арҫын-и вӑл хӗр илсе каяймасть та... Ҫапах авланасшӑн. *(Ильнар ҫине кӑтартса.)* Вӑт ак кам пек пулмалла ӑна. Ылтӑн ача вӗт, ылтӑн ача.
ИЛЬНАР. Начар ача эп, зур начар ача. Якши пулнӑ пулсан эпир тахҫанах тӑванлӑ пулмалла.
ГЕОРГИ. Пулмасть ӗнтӗ вӑл ачаран авланасси. Тӗшши пулса ҫитмен пулсан ӑҫтан унран йӗркеллӗ ҫимӗҫ пултӑр?

Авлансан та ашшĕ пекех çемйине пăрахса каять пуль те-ха... Аса илтĕм ĕнтĕ эпĕ вăл Юрике. Тахăш çул Пулмантăш хирне тырă вырма ячĕç, ман комбайн çине помошником лартнăччĕ ăна. Хĕр шухăшĕ кăначчĕ пуçĕнче.
НИНА. Çамрăк пулнă пуль ун чух.
ГЕОРГИ. Авланнăччĕ ĕнтĕ вăл. Ильнар пек чăваш ачи тупăнмарĕ-и-ха сан тĕле? Хам ача пекех çывăх вĕт вăл мана, пĕр ĕçрен те хăраса тăмасть. Мĕн ыйтсан та çук тесе каламасть. Пахча та сухаласа парать, утă та çулса парать, вуттине те кӳрсе парать. Пурнăçа та тытма пĕлет, хĕрсене те юрама пĕлет.
ИЛЬНАР. Сан хĕрне çеç, Георги абăй, тек мана никам та кирлĕ мар. Бирелĕ минĕкĕ Светана.
ГЕОРГИ. Çук, туй килме пултарать.
ИЛЬНАР. Килмест вăл, юратать пулсан хальччен килет. Эп килтĕм вĕт ак.
ГЕОРГИ. Килмессе пĕлсен тарăхнипе парăн та. Анчах туй килсе кĕрсен Светана мĕнле уйăрас тетĕр, вăрçă пуçласшăн-и ман килте?
ИЛЬНАР. Ых, тарăхтарса çитерчĕ ĕнтĕ мана вăл малай. Çиччас Камаза хускататăп та лартса килетĕп эпĕ ăна. Авланатăп тесен авланатăп тетĕр, çук тесен çук тетĕр. *(Карланкине кăтартса.)* Ак çакăнта ларать ĕнтĕ вăл. Эх, Света, хам алăпа хам качча паратăп вит сана. Тункăз баш вит мин, тунгăз баш.
СВЕТА. Ильнар, эпĕ те санпа.
ГЕОРГИ. Эс тата ăçта?
СВЕТА. Ильнара пĕччен кăларса яраймастăп ĕнтĕ, çул çинче хĕл кунĕнче тем курас пур. Хăйшĕн мар вĕт, маншăн тăрăшать, пирĕншĕн тăрăшать.
ГЕОРГИ. Чарăн теп сана! *(Светапа Ильнар тухса каяççĕ.)*
НИНА. Кайччĕр ĕнтĕ, Кешăна хăть тупса килччĕр, шăнса вилĕ ача. Кунта пуçа усса ларни мĕн усси.
ГЕОРГИ. Эх, аккăр-маккăр... Атя, Нина, ярса пар-ха ху юхтарнине, чун лăплантăр хăть.

**4 картина.** *Тĕттĕм. Мишель курăнса каять. Çутă пайăрки ун çине ӳкет. Ун патне шап-шурă тăхăннă хĕр чупса пырать, ун йĕри-тавра ташласа çаврăнать. Вĕсем пĕр-пĕринпе*

*пĕрлешсех каяççĕ тейĕн. Кайран Вася, Николя, Серж курăнса каяççĕ, вĕсем инструменчĕсемпе кĕвĕ калаççĕ. Ташласан-ташласан Мишельпе хĕр ташласах тухса каяççĕ.Çутă ерипен сӳнет те кăшт тăрсан çуталать.*
*Иккĕмĕш картинăри курăну.*
ЛИЧУК. Эсĕ выртман-и?
ЮРИК. Ыйхă килмест.
ЛИЧУК. Ну, шухăшусемпе ăçта çити çитрĕн?
ЮРИК. Эпĕ ăçта çитсен те, халь манран нимĕн те килмест, веçех санран килет. Ывăл туйĕнче пулса курас килетчĕ, шел туй пулмарĕ.
ЛИЧУК. Пулĕ-ха, пулĕ.
ЮРИК. Эп каланка хутса ятăм. Ачасене çывăрма ăшă пултăр терĕм.
ЛИЧУК. Ман вĕри чей ĕçес килсе кайрĕ. Шыв пĕтнĕ, ăсса кĕр-ха. Пусă тĕлне манман пуль?
ЮРИК. Эпĕ çиччас, Личук, çиччас. Эс хуш кăна, веçех тăватăп. *(Витре илсе тухса каять.)*

*Личук тĕпеле кĕрсе каять. Тепĕр пӳлĕмрен Вася тухать. Лена кĕрет.*

ЛЕНА. Вася, эп сан валли эмел илсе каçрăм.
ВАСЯ. Мана халь тин нимле эмел те пулăшмасть.
ЛЕНА. Мĕн пулăшать вара?
ВАСЯ. Пĕлместĕп, эп нимĕн те пĕлместĕп халь. Эп хама хам та ăнланми пулса пыратăп. Вăт çынна шанатăн, ĕненетĕн, унпа пурнăç тума шутлатăн, ачасем çуратма, вăл вара...
ЛЕНА. Мĕн пирки эс, Вася?
ВАСЯ. Çавăн пиркиех, юрату пирки. Эпир, музыкантсем, юрату пирки кĕвĕсем çыратпăр, поэтсем сăвăсем, пистаельсем романсем, художниксем картинăсем çыраççĕ. Пурте çав юрату çинчен. Юратăвĕ вара çĕр çинче пачах та çук пулас. Эппин эпир пĕр-пĕрне улталатпăр çеç.
ЛЕНА. Пур вăл юрату.
ВАСЯ. Эп ĕненместĕп. Малтан хама та пур пек туйăнатчĕ, халь туйăнмасть.
ЛЕНА. Эс урăх çĕрте шыратăн вăл юратăва, çавăнпа туйăнмасть. Эп ак тупрăм пулмалла ăна.

ВАСЯ. Эппин эсĕ телейлĕ, саламлатăп сана.
ЛЕНА. Телейлĕ мар çав, вăл урăххине савать.
ВАСЯ. Эппин ухмах вăл сана та тиркесе тăрать пулсан. Çаплах кала ăна, эсĕ ухмах тесе.
ЛЕНА. Калаймастăп çав.
ВАСЯ. Мĕншĕн?
ЛЕНА. Мĕншĕн тесен вăл ухмах мар, пăтраннă çеç. Юлташĕсем пăтратнă, вăйă выляса авлантарма шутланă...
ВАСЯ. Эс кам пирки, Лена, ман пирки-и? Эп чăнласах ухмах иккен. Эп вĕт хам та сан çинчен шутланă. Кӳршĕре пурăннипе тăван пек йышăннă та, пĕрле пулас пирки пачах та шутламан.
ЛЕНА. Эп вара ялан сан çинчен çеç шутлатăп.
ВАСЯ. Эх, Çĕнĕ çул каç тупăшман пулсан... Веçех çав ачасем айăплă. Ăçта-ха вĕсем?! *(Кĕрсе каять те кăшт тăрсан арçын ачасемпе тухать.)*
СЕРЖ *(ыйхăллăн).* Мĕн тен?
НИКОЛЯ. Туй пулатех-и вара?
СЕРЖ. Мишель, тăр, туй юрри вылямалла.
ВАСЯ. Туй юрри мар, Шопен вылямалла, хурлăхлă марш.
НИКОЛЯ. Тупнă шӳтлемелли.
МИШЕЛЬ. Мĕнле тутлă ыйха татрăн эс, Базиль. Мэри тĕлĕкре килчĕ. Эпир театрта пек! Nous avops danser la “Jisele”. (Ну авоп дансе ля «Жизеле». – Мы танцевали «Жизель»). Вăл Жизеле ташлать пек, эп Альберта. Унтан таçта çухалчĕ, кайран пурĕпĕрех килчĕ ман пата. Эппин вăл мана манман, вăл мана кĕтет. Мана илĕртет, илĕртет пек. Кайран эпĕ сывлăша çаврăнтăм пек, вăл та сывлăша çаврăнчĕ пек. Вара ик чăмăркка сывлăш пĕрлешсе кайрăмăр та таçта çити вĕçсе хăпартăмăр пек. Пăхатпăр та, эпир Эйфолевый башня çинче тăратпăр. Унта эсир те пур пек. Аялти лапамра французмсем пек, питĕ нумайăн, пурте пире саламлаççĕ пек.
СЕРЖ. Эйфолевый башня çинче? Парижра? Эпир те-и? Ку ырă паллă-çке, эс тĕлĕкре курни ялан пурнăçланать.
НИКОЛЯ. Эппин эпир Франция çитетпĕрех, Париж пире саламлатех.
СЕРЖ. Базиль, эсĕ ма савăнмастăн? Эпир Франция çитетпĕр. Мишель тĕлĕк курнă, пирĕн çинчен тĕлĕк курнă. Эпир Францинче тет.
ВАСЯ. Турпутевкăпа-и?

МИШЕЛЬ. Çук, эсир инструментсемпеччĕ, концерт вăхăтĕнче пек.
НИКОЛЯ. Маттур, Мишель, Нострадамус та сан пек тĕлĕк курман пуль.
СЕРЖ. Урра, пире Париж кĕтет!
МИШЕЛЬ. Урра! Эп Мэрине куратăпах! Эпĕ унпа пĕрле пулатăпах!
СЕРЖ. Ан хуйхăр, Базиль. Что ни делается, все к лучшему теç вырăссем.
ВАСЯ. Мĕн лайăххи унта? Улталарĕç мана, пурте улталарĕç. Чи хăрушши хама хам улталарăм, халĕ те пулин улталатăп. А вĕт ман пурнăç пуçланать кăна-ха. Ултавран пуçламалла-и вара ăна?
НИНА*(тухать).* Эсир çывăрмастăр-çке.
ВАСЯ. Аннеçĕм, кала-ха эс мана, мĕскер тăвас?
НИНА. Чĕрӳ хушнине ту ывăлăм. Чĕрӳне тăнла, вара тин телейне тупăн. Эп сана урăх ним те калаймастăп.
ВАСЯ. Чĕре хушнине тусан нимĕнле туй та пулмасть, анне. Ухмах сан ывăлу, ухмах. Савăнтарас тенĕччĕ эпĕ сана, савăнтарас чухне хурлантаратăп. Малтан атте хурлантарнă, халь эпĕ. А вĕт эсĕ ытарайми çын, сана эпир алă çинче йăтса çӳремелле. Эпир вара саншăн тĕрек вырăнне пулмаллисем....
ЮРИК *(кĕрет).* Мĕн те пулин пулнă-и?
ВАСЯ. Пулнă. Çĕр чăмăрĕ кутăн май çаврăна пуçланă. Ну, пăх эсĕ ху çине, кам эсĕ? Упăшка çапла пулать-и? Атте çапла пулать-и? Тĕнче касса çӳретĕн. Кала-ха эс, мĕскер санăн ак çакăнта? *(Юрикĕн кăкăрне чышса.)* Ăçта санăн çĕрӳ, ăçта семйӳ, ăçта килӳ? Яту мĕнле санăн, этем? Арçын-и? Çук сан нимĕн те. Тĕнче тăрăх алланă эсĕ хăвăн телейне, нимĕн те хăварман. *(Укçа тĕркине илсе.)* Мĕн, ак çакăнта тетĕн-и хăвăн телейне? Е пирĕн юратăва унпа сутăн илесшĕн пултăн-и? *(Укçа тĕркине Юрике парса.)* Кирлĕ мар мана санăн укçу, эп сана хам та укçа пама пултаратăп. Кашни каç ресторанра юрлатпăр. Мана атте кирлĕ пулнă, эсĕ юнашар пулни кирлĕччĕ вăхăтĕнче. Кала, ма авланнă эс, ма мана çуратса янă? Хураву çук? Манăн та хурав çук çав. Ну, авланатăп эпĕ халь. Кайран ман çемйе çулĕ мĕнле çулпа каять? Пĕр çулпа мар-çке, юпленет ăшри кĕвĕ пĕр килмесен. Уйрăлассишĕн авланмалла-и-ха вара? Хам ачаран шутлаттăм атте пек

нихăçан та пулмастăп тесе. Хам вара çав çул çинех тăра пуçланă. Каçар мана, анне. Je deteste moi – meme. (Жё детест муа – мэм. - Я ненавижу сам себя?) *(Йĕрет.)*
МИШЕЛЬ. Базиль, мĕскер эс?
СЕРЖ. Эп айăплă куншăн. Pardonne moi, Basil. (Пардонне муа, Базиль. - Извини, Вася.)
НКОЛЯ. Эпир пурте айăплă. Тупрăмăр ача вăйăи, ирĕксĕр авлантаратпăр ачана. Каçар, Базиль.
МИШЕЛЬ. Pardonne moi, Basil. Nous somme tout devenu un peu fou. (Пардонне муа, Базиль. Ну сом ту девеню эн пё фу. - Извини, Вася. Наверно все мы сошли с ума.)
ЛЕНА. Вася, лăплан, тăванăм.
ВАСЯ. Каçар мана, Лена, эпĕ халь тин ăнлантăм  санран çывăхраххи маншăн чăнах та никам та пулмасть пуль.
ЗОЯ*(тухать).* Куç ӳкмен-ши ачана? Веçех айванланса кайрĕ.
ЮРИК. Эпĕ айăплă ĕнтĕ, арçын ачана ытларах атте кирлĕ. Эп вара çил ачи пек ялан таçта, ютра. Каçар мана, Личук., айăпăм пысăк манăн санăн умра. Ытлă-çитлĕ усрас килетчĕ сире. Анчах чылай вăхăт уйрăм пурăнни ютшăнтарать çав çынсене. Каçар, Вася, эсĕ те, йăнăшсем чылай турăм эпĕ пурнăçра. Сана та çакна калама килтĕм: авланиччен малтан пуç тавра лайăх шутла.

*(Вася инструментне илсе  кĕвĕ выляма тытăнать. Арçын ачасем те ун хыççăн хăйсен инструменчĕсене илсе кĕвĕ выляма тытăнаççĕ.)*

ЛИЧУК. Эх, мĕн пулса иртет-ши ăшĕнче?
ЗОЯ. Пăтранать тем.
ЛИЧУК. Луччĕ халь пăтрантăр авланнă хыççăн çеç пăтраниччен.
ЗОЯ. Арась, арась. Хамăра хамăр ирĕксĕрлени ырри патне илсе çитермест. Эпир те ак суйрăмăр вĕт сана, Лида.  Арлă-арăмлă мар эпир Юркапа. Пĕччен пурăнать вăл, эпĕ те пĕччен. Эсир туй хыпарне ярсан пĕрмай хуйхăрчĕ киле мĕнле пырса кĕрес тесе. Яла пĕччен пырса кĕрсен тем шутлĕç тет, ниме юрăхсăр çынна çаврăннă тесе шутлĕç тет. Атя пĕрле каяр тет. Малтан килĕшмерĕм, кайран ӳкĕте кĕртрĕ. Хам та ултă çул Шамкайĕнче пулман, килсе курас килчĕ. Тете ман

чирлĕ, виличчен килсе кур-ха тесе ялан чĕнсе ярать. Аякри çула пĕччен тухса килме шикленсе тăтăм. Ак халь Юркан та килме сăлтав тупăнчĕ те, тухса килтĕмĕр вара çапла. Ыран ак Шамкайне кайса тăван киле кĕрсе чун каниччен йĕретĕп те, пĕрер каç выртнă хыççăн каялла çула тухатăп.
ЛИЧУК. Маншăн халь пурпĕрех кампа вăл пурăнать. Вася тĕрĕс каларĕ, унран чун риснĕ пирĕн.
ЗОЯ. Ӳкĕнет вăл, ахалех Личука хамран пистертĕм тет. Ман упăшка та чăваш пулнипе чунĕ кӳтсе килсен ялан пирĕн пата килсе ларатчĕ, юлташлăччĕ вĕсем. Тунмастăп, упăшка вилнĕ хыççăн ĕç çĕлеме арçын вăйĕ кирлĕ чухне хам та ялан ăна кайса чĕнетĕп. Ӳркенсе тăмасть, пулăшать. Ĕçчен сан упăшку. Çулла йетем çинчи техникăна ĕçлеттерсе тăрать, хĕлле çăм таптарать, кăçатă йăвалать. Ахаль лармасть, ĕçкĕпе иртĕхмест. Пурăнасса вара кĕлетсем патĕнчи хурал пӳртĕнче пурăнать. Таврăнас кăмăлĕ те пур та, эс кĕртмесрен хăрать. Личуксăр пуçне мана халь тин никам та кирлĕ мар тет.
ЛИЧУК. Эх, мĕн хурлăхлă кĕвĕ выляма пуçларăр-ха эсир? Тăсса ярăр-ха хаваслине, чăвашлине. Туй пулать-и, пулмасть-и – ташласа юлар хăть. Мишель, ташлаттар-ха пире.

*Арçын ачасем ташă кĕвви пуçлаççĕ. Мишель Зояпа Личука ташша илсе тухать. Кеша кĕрет.*

КЕША. О, эсир кунта туй пуçланă та иккен. Кам авланать, кам качча каять? Эсĕ-и, эсĕ-и е эсĕ? Света йĕре-йĕре кĕтсе ларать, вăл вара ăна пырса илме те шутламасть. Е теприне тупса ятăн-и? Тен эсĕ авланасшăн та мар?
НИКОЛЯ. Эпир пыма тухрăмăр. Хăвах куртăн пуль çул мĕнлине.
КЕША. Куртăм, вара мĕн? Эп çитрĕм-çке ак йĕлтĕрпе те пулин. Эсир те пыма пултарнă. Туй халăхне илсе пыраймасан хăть пĕччен пырасчĕ. Пыраймасан хăть хыпар тăвасчĕ.
СЕРЖ. Ку ял лапра, кунта нимĕнле телефон та тытмасть.
КЕША. Шырасан майне тупма пулать. Вĕсене кĕтен-кĕтен, вăл вара вырăнтан та хускалман. Ун пек чухне пуçа темле шухăш та кĕрет. Ну, мĕн чĕнместĕн? Авланатăн-и эсĕ паян е çук?

НИКОЛЯ. Ма Светана илсе килмерӗн вара? Халех туй пуҫлаттӑмӑр, ниҫта та каймалла пулмасчӗ.
КЕША. Эсир мӗн пире намӑс кӑтартасшӑн-и? Ӑҫта пулнӑ вӑл хӗр каччӑ патне килсе ларни? Пӗтӗ хӗр мар вӗт вӑл. Ну, мӗн тӑран? Авланатӑн пулсан – авланатӑп те, авланмастӑн пулсан тӗсӳ те ан пултӑр сан. Урӑххи тупӑнать йӑмӑк валли.
ЮРИК. Авланма шутланӑ ҫын авланатех ӗнтӗ. Ма васкас? Паян авланмасан ыран авланать. Туй халӑхӗсӗр туй илемлӗ пулмасть, ху пӗлен. Ҫурҫӗр варринче ҫынсене вӑратса ҫӳрер мар ӗнтӗ. Ак ҫанталӑк лӑпланать те, машинсемпех тиенсе пыратпӑр. Кам пулатӑн-ха эсӗ, хӑта?
КЕША. Кеша, хӗрӗн тетӗшӗ.
ЮРИК. Эп йӗкӗтӗн ашшӗ. Атя паллашнӑ ятпа пӗрер черкке ӗҫер-ха. Киле-киле шӑнтӑн та пуль.
КЕША. Шӑнман эп, чӑм шыва ӳкрӗм. Ку туя пула йӗп ҫинчи пек паянхи кун.
ЮРИК. Эпир те савӑнса лармастпӑр. Анчах ҫанталӑка хирӗҫ нимӗн те тӑваймастӑн, ху пӗлен. Атя  ҫамрӑксен телейӗшӗн пӗрер черкке ӗҫер-ха.
КЕША. Вӗсемшӗн туйра ӗҫӗпӗр-ха. Атя йӗлтӗр туп та, кайрӑмӑр, хӗр илме килнӗ ячӗ пултӑр хӑть. Ыттисем  ирхине, ҫула уҫсан пырӗҫ.
ЛИЧУК. Мӗн тӑвас тетӗн, ачам? Шухӑшун вӗҫне тупрӑн-и?
ВАСЯ. Туй пулмасть. Эп авланмастӑп.
КЕША. Мӗн? Авланмастӑн?
ВАСЯ. Санпа вара пыратӑп. Ман Светана курмаллах, унпа калаҫмаллах. Эпир выльӑхсем мар-ҫке, пӗр-пӗрне каҫарма та пултаратпӑр, ӑнланма та.
СЕРЖ. Эпир вара мӗскер тӑвар?
ВАСЯ. Сирӗн кӗтме тивет.
НИКОЛЯ. Мӗскер кӗтме, Базиль?
ВАСЯ. Пӗлместӗп. Эп хам та нимӗн те пӗлместӗп. Ҫакна кӑна пӗлетӗп, ман Светапа курса калаҫмаллах. Кайрӑмӑр.

*Машина сасси. Свентпа Ильнар кӗреҫҫӗ.*

Света, каҫар мана, эп сана илме пыраймарӑм.
СВЕТА. Ху каҫар мана, эпӗ ак...

СЕРЖ. Эпир пыма тухнăччĕ, анчах çул çуккипе каялла таврăнтăмăр.
ЮРИК. Чим-ха, эсир тата мĕнле майлă çитрĕр?
ИЛЬНАР. Çул уçтартăм. Светашăн тем тума та хатĕр эп, дорожниксене ятарласа чĕнсе илтĕм.
СЕРЖ. Сирĕн ялта связь пур-и вара?
ИЛЬНАР. Пур. Ротор çаклатнă КАМАЗ килчĕ те, мĕн вăхăтра çула уçса пачĕ.
НИКОЛЯ. Эппин халĕ çул уçă?
ИЛЬНАР. Уçă, хăть те ăçта кайма та пултаратăр. Ни халь, Сергей?
СЕРЖ. Якшă?
ВАСЯ. Serge, qui est-ce, ce garson? (Серж, ки эс се гярсон? – Серж, это он тот парень.)
СЕРЖ. Oui.(Уи – Да.) Вăл.
ЮРИК. Апла халь йĕкĕт пур, хĕр пур. Туй кĕрекине чĕнер пуль çамрăксене, Личук.
СВЕТА. Тăхтăр! Вася, эсĕ питĕ лайăх çын, çавăнпа ăнланма тивĕç мана. Пире пĕрлешмесессĕн лайăхрах пулать.
ЗОЯ. Эй, тĕнче...
НИКОЛЯ. Pourguoi, Svetlana? (Пуркуа, Светлана? – Почему, Светлана?)
МИШЕЛЬ. Que est-ce que c est, Basil. (Кес кё се, Базиль? - Что это значит, Базиль?)
НИКЛОЯ. Эпир калаçса татăлтăмăр-çке Çĕнĕ çулта.
СВЕТА. Чи ухмахла шухăш пулчĕ вăл. Вася, эсĕ питĕ лайăх ача, килĕшетĕн те мана, анчах юратни манăн урăххи, Ильнар.
ВАСЯ. Эпĕ вара, кам эпĕ саншăн? Ăнах юратнă пулсан мĕншĕн мана качча тухма килĕшрĕн?
ИЛЬНАР. Вася, эпир Светпа тахçантанпах пĕр-пĕрне юрататпăр. Анчах Георгий абăй юк та юк дир. Вăт ни за что та мана Светана парасшăн пулмарĕ. Татар малая бирми дир. Хăть те мĕн ту эсĕ мана, Вася, анчах ман Светапа пĕрле пулмаллах.
ВАСЯ. Эсир капла та пĕрле пулнă теççĕ, пĕр хут кăна та мар. Ку тĕрĕсех-и, Света?
СВЕТА. Тĕрĕс. Каçар мана, Вася, эп юрататăп Ильнара. Анчах атте мана Илнара нихăçан та качча памап терĕ те, çавăнпа кăна килĕшрĕм эпĕ сана качча тухма.  Эп пурпĕр

Ильнара манаймастăп, юрататăп эпĕ ăна, çав тери юрататăп. Вася, атя пĕрлешместпĕр. Атя туй тумастпăр
ИЛЬНАР. Эпĕ те унсăр пурăнаймастăп, Вася.
КЕША. Тахçанах çав кирлĕ те.
ВАСЯ. Мерси, мерси боку, Света. Эсĕ халĕ хăвна кăна та мар, эсĕ мана та çăлтăн. C'est un tres courageux pas. (Сет ен тре куражё па. - Это очень мужественный шаг.) Çапла-çапла, çав тери юратакан çеç çак утăма тума пултарать. Пĕлместĕп, тен лайăхах пурăнса каяттăмăр эпир санпа, тен лайăхах та мар. Анчах çакна калама пултаратăп, атте пек сана пĕччене пăрахса хăвармастăмах. Юрату вара... Пур-и çĕр çинче юрату, çук-и – юлашки вăхăтра эп иккĕлене пуçларăм.
СВЕТА. Пур, пур...
ИЛЬНАР. Бар, конечно, пур юрату.
ВАСЯ. Пур пулсассăн эппин эсир телейлĕ. Эп вăл пуррине питех туймарăм анне юратăвăсĕр пуçне. Сирĕн телейе вара эпĕ татма пултараймастăп. Pardonne moi, maman. (Пардонне муа, мама. – Прости, мама.)
ЛИЧУК. Эп каçаратăп, Турă каçартăр.
ВАСЯ. Ну, мĕн тăратăр, тытăр инструментăрсене. Çĕнĕ çемье çуралать çĕр çине.
ЛЕНА. Туй пулать-и вара?
ИЛЬНАР. Пулать, епле ан пултăр? Эбилэр никаях укыла. Аппа мунча хутса та хучĕ пулĕ ĕнтĕ. Ыран пурте пирĕн туя пырăр, кунаклар.
ЛИЧУК. Эх, Юрик, тăсса яр-ха эсĕ те аккордеонна, çитет пуль ĕнтĕ унăн тунсăхлăн ларса.
ЮРИК *(аккордеонне илсе).* Чăваш кĕвви каламалла-и, тутар кĕвви-и?
ИЛЬНАР. Хăть чăвашла, хăть тутарла – эпир темле те ташлама пĕлетпĕр. Ахальтен Асанкассинче пурăнатпăр-и эпир.

*Юрик тата арçын ачасем инструменчĕсене илсе кĕвĕ выляма тытăнаççĕ. Ильнарпа Света ташлаççĕ, кайран Кеша та хутшăнать.*

СВЕТА. Каçар мана, Вася.
ВАСЯ. Телейлĕ пул.

ИЛЬНАР. Ну, кӗтетпӗр вара сире Асанкассинче, пурте пырӑр.

*(Света, Ильнар тата Кеша тухса каяççӗ. Арçын ачасем вӗсене ӑсатма тухаççӗ.)*

ВАСЯ. Пӗлетӗн-и, Лена, эп пирвайхи хут хама телейлӗн туйса илтӗм. Атту ӑшра ялан тем вӑркӑшатчӗ. Тем çитмест пек, тем ытлашши пек туйӑнатчӗ. Халь вара темле ырӑ-ырӑ пулса кайрӗ.
ЗОЯ. Ну, мӗн шутлатӑн, Юрик, Оренбурга таврӑнатӑн-и е кунтах юлатӑн?
ЮРИК. Личук мӗн калать вӗт.
ЛИЧУК. Ман мӗн калас? Ну, мӗн калас ӗнтӗ манӑн сана, ӑш çунтармӑшне? Лар ак кунта. Вася, эс пирӗн хушша лар. Камарадесем ӑçта тата?
ЛЕНА *(алӑк уçса).* Мишель, Серж, Николя, кӗрӗр часрах.
*(Арçын ачасем кӗреççӗ.)*
ЛИЧУК. Хӑшӑрӑн фотоаппарат пурччӗ-ха унта? Ну-ка асӑнмалӑх ӳкерсе илӗр-ха пирӗн çемйене.
ВАСЯ. Тӑхтӑр, пурте мар-ха кунта. Лена, кил кунта ман çума. Ак çакӑн пек пулать пирӗн çемйе.
МИШЕЛЬ. Bravo, Basil!
СЕРЖ. Bravo, maman!
НИКОЛЯ. Bravo, camarade!

(Арçын ачасем пурте телефонӗсене кӑларса фото çапаççӗ.)

Вӗçӗ.